Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1938 ИЙУН 14 ЫТЛАРИКУН 134 (4947) №

Чăваш Коммунĕ

21-мĕш çул тухать

ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Тĕпĕçтăвкомăн хаçачĕ

Пĕр №-рĕ 10 пус

РЕДАКЦИПЕ КАНТУР АДРЕСĔ: Город Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати

ТЕЛЕФОНСЕМ: Редакторăн 0—67, Ред. заместителĕн 0—88, Редакци секретарĕн 4—40, Дежурнăйăн 6—23

Социалисăмла çĕршывăн хĕрарăмĕсем

РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсен суйлав кампанийĕ халăхăн пысăк çĕкленĕвĕпе пулса пырать. Суйлав кампани кунĕсенче Октябĕр революцийĕн çĕнтерĕвĕçем уйрăмах ÿссĕн курăнаççĕ.

Хĕрарăмсем, арçынсемпе танах, суйлав комиççийĕсенче активлăн ĕçлесе, довереннăйсем тата агитаторсем пулса хăйсен пултарулăхне, хастарлăхне кăтартаççĕ. Суйлав умĕн пулса иртекен митингсемпе пухусенче совет хĕрарăмĕсем социалисăмла çĕршывăн пысăк çĕнтерĕвĕсемпе чаплăхĕ çинчен, большевикла партине тата халăхăн йуратнă çулпуçне—Аслă Сталина савса хĕрÿллĕ сăмахсем тухса калаççĕ. Пурнăç чăнлăхĕ çинчен пит те тĕрĕс сăмахсем калаççĕ вĕсем. Вĕсен илемлĕ, çавăрнăçулă чăн сăмахĕсем пур суйлавçăсене те çунатлантараççĕ, хавхалантараççĕ.

Совет хĕрарăмĕ—социалисăмла общĕствăн пĕртан правалă членĕ, хăйĕн телейлĕ те савăнăçлă пурнăçне совет влаçĕн ĕмринче çеç курма пултарчĕ. Çĕршыва индустриализацилени—çĕршывăн сăнсăпатне тĕпренех улшăнтарчĕ. Хĕрарăмсем пинĕ-пинĕпе хапрăксенче, савăтсенче ĕçлеме пуçларĕç, социалисăмăн пултарулă ĕçне хутшăнчĕç.

Хапрăк-савăт, колхоз ĕçĕнче вĕсем активлă общественницăсем, ударницăсем, стахановкăсем йулаççĕ. Хулара та, йалта та хĕрарăм социалисăм тăвас ĕçре, государствă управленинче арçынсемпе пĕрле, алла-аллăн тытса ĕçлет. Хĕрачасем, арçын ачасем пекех, шкулсенче пĕртан правапа вĕренеççĕ. Пĕртан ĕçшĕн хĕрарăм арçынсемпе пĕртан ĕçукçи илет. Çĕршерĕн-пиншерĕн хĕрарăмсем йертсе пыракан ĕçсенче ĕçлеççĕ, вĕсем хушшинче сахал мар пултарулă инженерсем, архитекторсем, наукă работникĕсем, директорсем тата ыт. те.

Совет хĕрарăмĕн çĕнĕрен çĕнĕ сийĕсем—ĕмĕрхи ыйăхран вăраннăскерсем—политикăлă активлă пурнăçа хутшăнса пыраççĕ. Хĕрарăмсен чаплăран та чапла прависене Сталинла Конституци çине ылтăн саспаллисемпе çырса хунă. Хĕрарăмсене çавăн пек пысăк правасем панă çĕршыв тĕнчере урăх çук.

Çакăн пек ирĕклĕ, телейлĕ пурнăçа хĕрарăм ĕлĕк тĕлĕкре те курма пултарайман. „Пайанхи пурнăç—Октябĕр революцийĕн ырлăхĕ, ку пурнăçа пире Ленинăн—Сталинăн аслă партийĕ туса пачĕ. ...Ĕлĕкхине аса илсен, халĕ манăн куççулĕ тухать. Патша Роççийĕнче епĕр пусмăр айĕнче пурăннă. Аçта кайсан та пирĕншĕн çул питĕрĕннĕкчĕ, хĕнхурлăччĕ“,—тет Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама тăратнă кандидат—Матшÿри пуçламĕш шкул директорĕ Григорйĕва йулташ.

Чăн сăмах. Патша саккунĕсем хĕрарăмăн прависене хĕстерсе, пÿлсе пынă. Час-часах вăл йе унăшкин, йе ашшĕн чури пулса тăнă. Хĕрачасем шкулсене ытлах та сахал çÿренĕ. Хĕрарăмсем пурте тенĕ пекех, вулама та, çырма та пĕлмен. Пĕр пек ĕçшĕнех вĕсем ĕçукçи арçынран кайа илнĕ. Хĕрарăмсем пусмăрлăх, хĕнхур тытканĕнче пурăннă.

Уйрăмăнах чăваш хĕрарăмĕн пурнăçĕ йăвăр пулнă. Капиталиссен, кулаксен пусмăрне чăтнипе пĕрлех, вăл çемйери пусмăра тÿссе пурăннă. Вăл килхушшинчи ĕçсене тунă, вылăх-чĕрлĕх пăхнă, арçынсем инçете çăкăр шырама, ĕç шырама кайсан, уйхир ĕçне те хăйех тунă. Хĕрачаран качча кайма кăмăл пуррине ыйтса тăман, ирĕксĕрех качча панă, вăрлаттарса та йанă.

Иртрĕç вăл хура кун-çулсем. Кивĕ пурнăç лăплапĕнчен тасатнă çĕр çинче ĕнтĕ социалисăмăн чаплă çуртне туса лартнă. Вăл çурта тăваканни—мухтавлă архитектор Сталин йулташ йертсе пыракан большевиксен партийĕ, вăл çурта тăвакансем—рабочисемпе работницăсем, колхозниксемпе колхозницăсем, совет интеллигенцийĕ—арçынсемпе хĕрарăмсем.

Социалисăмла общĕствăра хĕрарăмăн пĕртан прави саккунра çеç мар, куленхи пурнăçра, йалара, ăнланура та. Ана епĕр çак тĕслĕхрен те аван куратпăр: Чăваш республикĕнчен РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама тăратнă 7 кандидатран хĕрарăмсем—виççĕн: Чăваш АССР Тĕпĕçтăвком председателĕ З. А. Андрăйĕва, Шупашкар хула совечĕн председателĕ — П. И. Калинкина, Канашри вакунсем йусакан савăтри стахановкă—Йе. А. Антонăва йулташсем. Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама хĕрарăмсенчен 25 кандидат тăратнă. Вĕсем хушшинче: колхозница, палла дойаркă Йефимăва, йĕтĕн ăсти, орденоносĕц Чекменĕва, колхоз председателĕ—Махайлăва, йалсовет председателĕ—Смирнова, учителница Новикăва, „спирт“ савăтĕнчи техорук помошникĕ Йакимăва, райĕçтăвком председателĕ Родионăва, парти райком секретарĕ Меценатăва т. ыт. йулташсем те. Вĕсем чăваш халăхĕн хисеплĕ, шанчăклă хĕрĕсем. Вĕсене чăваш халăхĕ шанать, йуратать. Çак йуратăва, шанăçа, тивĕçлĕхе вĕсем çĕнĕ пурнăçшăн—ĕççыннисен телейлĕ пурнăçĕшĕн çине тăрса кĕрешнипе, халăх тăшманĕсемпе—фашиссен агенчĕсемпе—троцкисла, бухаринла бандăсемпе тата буржуалă националиссемпе хайаррăн кĕрешсе пынипе илме пултарнă. Ана епĕр вĕсен пурнăçĕсемпе ĕçĕсенчен аван куратпăр.

Акă, Виноградăва йулташах илер. Вăл чухăн хресчен çемйинче çуралнă. Унăн çамрăклăхĕ савнăççăр иртнĕ. 11 çултах çынсем патĕнче тара кĕрĕшсе ĕçлемеле пулнă. Чухăн пурăннипе унăн пуçламĕш шкултан вĕренсе тухма та май пулман.

Ана колхоз пурнăçĕ çын турĕ. Ийунĕн 9-мĕшĕнче Тури Қарачура (Вăрнар р.) колохзникĕсен пухăвĕнче вăл хăй çинчен çапла каланă.

„Октаберти аслă революци хыççăн тин пирĕн пек çынсем çын шутне кĕрсе ырă пурнăçпа пурăнма тытăнчĕç. 1928 çулта йалти общĕствăла ĕçре тата совет оргăнĕсен ĕçĕнче активлă ĕçлеме пуçларăм. 1930 çулта, партипе комсомол организацисемпе пĕрле, колхоз организацилерĕмĕр. Йулашки çулсенче бригадир, колхоз председателĕ, йалсовет председателĕ пулса пĕтĕм вăйа хурса ĕçлерĕм. Партипе совет оргăнĕсем манăн ĕçе тивĕçлипе хакларĕç, мана темиçе хутчен те премилерĕç. Мана Ленин—Сталин партийĕ, тăван çĕршыв пăхса çитĕнтерчĕç. Епĕ, ĕлĕк çын шутĕнче пулман хĕрарăм, государствăн аслă оргăнĕн депутатне суйланмали кандидат пулма, халăх шанчăкне илме тивĕçлĕ пултăм. Çаксене пире коммуниссен партийĕ, йуратнă Сталин йулташ туса пачĕç.

Есĕр мана Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата палăртни ман çине пысăк ответлăх хурать. Пирĕншĕн, совет çыннисемшĕн, халăх шанчăклăхне илес тивĕçлĕхрен хакли урăх ним те çук. Епĕ сирĕн шанчăка ĕçре пурнăçлăп“.

Çапла унăн чаплă пурнăç шкулĕ, хисеплĕ ĕçĕ. Виноградăва йулташ пĕччен мар, вĕсем пинг ерĕн. Вĕсем çĕнĕ çынсем. Ĕлĕк пулман пирĕн ун пек хĕрарăмсем. Ирĕклĕ ĕç, колхозри ĕç кăна çавăн пек паттăр хĕрарăмсене çитĕнтерме пултарчĕ. Çавăнпа ĕнтĕ чăваш халăхĕ Верховнăй Совета суйлама тăратнă хĕрарăм кандидатсене—халăхăн мухтава тивĕçлĕ хĕрĕсене чĕререн хапăллать, вĕсемшĕн сасăлама хатĕр тăрать.

Пирĕн ПСК(б)Партин Тĕп Комитечĕ чĕнсе каланине йалăн асра тытмала:

„Хĕрарăм патша Роççийĕнче чура пулнă, вăл капиталисăмлă çĕршывсенче пуринче те çаплах халĕ те чура пулса тăрать. ССР Сойузĕнче анчах вăл ирĕклĕ те тулли правалă. Хулара та, йалта та хĕрарăм социалисăм строителствипе государства управленинче арçынпа алла-алăн тытăнса ĕçлет. Пирĕн çĕршывра анчах хĕрарăм валлĕи тулли пурнăçла телейлĕ ача амăшĕ пулма условисем туса панă. Совет саккунĕсем ача амăшĕн прависемпе ачасен сывлăхне сыхласа тăраççĕ.

Çак çитĕнÿсене пирĕн халăх большевиксен партийĕ йертсе пынипе турĕ.

Кам пирĕн совет хĕрарăмĕ хуçалăхпа управленин мĕн пур ĕçĕсенче малашне те ирĕклĕ тата тулли правалă пултăр тесе тăрăшать, вăл большевиксен партийĕшĕн сасалĕ, вăл коммуниссемпе партире тăман нисен блок кандидачĕсемшĕн сасалĕ“.

Грузи халăхĕн пĕрремĕш кандидачĕ

ТБИЛИСИ, ийунĕн 12-мĕшĕ (ТАСС). Хĕрлĕ хăмач çине тунă транспарантсем, чĕрĕ чечексен йарапрписем, йалавсем, çулпуçсен тата депутата суйлама палăртнă кандидатсен портречĕсем — акă мĕнпе илемленсе тăрать Тбилиси хулинчи Ленински район. Пур çĕрте те Сталин йулташăн—Грузин СС Республикĕн Верховнăй Советне суйлама палăртнă пĕрремĕш кандидатăн портречĕсем.

Хĕвел йарăмĕсем çÿлĕ сăрт-тусем хыçĕнчен тин çеç курăна пуçланă-ха, анчах районри ĕççынисем пурте вăраннă ĕнтĕ. Çынсем ушкăнпа тата пĕччеңшерĕн пысăк хаваслăхпа суйлав участкисем патнеле утнă.

Тăваттăмĕш номерлĕ суйлав участки Сталин йачĕпе тăракан парăвусĕмпе вакунсем йусакан савăт çуртĕнче вырнаçнă. Савăтри ватă рабочи Захарий Мамисашвили аслă Сталин йачĕпе суйлав бÿллетенне никăмран малтан илнĕ.

Улттăмĕш суйлав участкинче сасăлакан чукунçул рабочисем пĕтĕм халăх праçник кунĕнче çурçул хушшинчи плана тултарса çитерне. Шăп ултă сехетре çав участкăра стахановĕц Михаил Йаворин тимĕрç бÿллетенне суйлав урнине никамран малтан йанă.

Часах участкăри суйлавçăсем хушшинче савăнăçлă хыпар сарăлнă. Вакунсем йусакан 5-мĕш участкăри рабочисем çурçул хушшинчи плана срукчĕнех тултарнă. Виçĕ сехет тĕлне йулашки вакуна йусаса кăларнă.

Суйлав участкинче сасăланă вăхăтра, Ленински суйлав округĕн округри суйлав комиççинче хĕрÿлĕ ĕç пынă. Участкăри комиççисем сасăланă çĕрте миçе суйлавçă пулнине кашни сехетрех пĕлтерсе тăнă.

Çав кун кунĕпех музыкă выляна, тăван çĕршыв çинчен, пĕтĕм халăхсен пĕрремĕш кандидачĕ—йуратнă Сталин çинчен йурланă йурăсем хаваслăн йанраса тăнă.

(ТАСС).

Грузи халăхĕн савăнăçĕ

ТБИЛИСИ, ийунĕн 12-мĕшĕ. Пĕтĕм Грузи халăхĕ ийунĕн 12-мĕшĕнче телейшĕн, социалисăмла хуçалăха тата културăна малала чечĕклетессишĕн, Ленинпа Сталинăн аслă ĕçĕшĕн сасăларĕ. Кашни суйлавçă хăйĕн чĕринче телейлĕ пурнăç тăвакан аслă Сталин сăнарне усрать. Аслă çулпуçăн тĕрĕсрен те тĕрĕс соратникĕ Молотăв йулташ суйланакан суйлав округĕ Сталин йатне илнĕ.

Суйлав округне пичет ĕçĕнче ĕçлекен Хачатурăв йулаташ чи малтан пынă. Вăл 63 çулта, анчах хăйне вăл çамрăк пек туйать. Вăл савăнăçлă та телейлĕ. Сумбет Меликăвич производствăра 50 çул ĕçлет ĕнтĕ. Вăл „Коммунист“ йатлă типографинчи рабочисемпе служăщисĕн суйлав умĕнхи пухăвĕнче Грузин ССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата Молотăв йулташа палăртнăччĕ, халĕ вăл хăйĕн бÿллетенне суйлав урнине чи малтан йачĕ.

Иккĕмĕш суйлав учаскинче Грузи Верховнăй Советне депутата суйламали кандидат Илйа Андрейĕвич Циклаури сасăлать, унăн ывăлĕ Андрей Васийлĕвич Циклаури—мухтавла машинис, ССРС Верховнăй Совечĕн депутачĕ.

Илйа Андрейĕвич хăйĕн граждăн тивĕçне пурнăçа кĕртсе çапла калать:

— Епĕ, пирĕн суйлав округĕнчи суйлавçăсем пекех, Сталинăн шанчăклă соратникĕшĕн, Совет правителствин пуçлăхĕшĕн—Вйачеслав Михайлăвич Молотăвшăн сасăланишĕн телейлĕ. Пирĕнни пек савăнăçпа, пирĕнни пек телейпе пĕтĕм Грузи халăхĕ пурăнать.

(ТАСС).

Çулпуçăн тăван çĕршывĕнче

Гори хулинче, хисеплĕ хăнасене кĕтекен килйышри пекех, пĕтĕм халăхăн хаваслă хускалăвĕ.

Суйлав умĕн, ийунĕн 11-мĕшĕнче, кандидатсем Егнаташвили, Абалаки, Базандарашвили, Кецховели йулташсем хăйсен суйлавçисемпе тĕл пулчĕç.

... Тул çутăлса килет. Çурхи хĕвелĕн малтанхи çуттисем тĕксĕмлĕхе сиреççĕ. Хăвăрт йухакан Лиахвă çырмин шавĕ илтĕнет. Ир-ирех хула вăранать. Тăватă сехет те çитмен-ха, анчах уйав сисĕнет. Пурте суйлав участкине васкаççĕ. Кашнийех хăйĕн бÿллетенне пуринчен маларах парасшăн.

Пиллĕкмĕш суйлав участкине килхуçи хĕрарăмĕ Надă Мчедлидзе пынă. Вăл кăмăлне çĕклентерсе хаваслă минута кĕтнĕ.

Квешинскăри суйлав участкине 135 çулхи Соломон Гаврилăвич Гигунашвили тата унăн килйышĕнчи тăвансем вăтăр иккĕн пынă. Инçетри йалсенче пурăнакан суйлавçăсене машинăсемпе илсе килнĕ.

12 сехет тĕлне суйлавçăсенчен иккĕ виççĕмĕш пайĕ сасăланă. Суйлавсем нихăçан та никам уйăрайми пĕрлĕхĕн демонстрацийĕ тата „пĕтĕм халăх праçникĕ пулса тăнă.

(ТАСС).

Епĕр Сталиншăн сасăлатпăр!

ЕРЕВАН, ийунĕн 12-мĕшĕ (ТАСС). Ийунĕн 12-мĕшĕнче Армени халăхĕ Сталинла Конституци тăрăх хăйĕн республикĕн Верховнăй оргăнне суйланă.

Суйлавçăсен пирвайхи ушкăнĕсем—стариксемпе çамрăксем, хĕрарăмсемпе арçынсем çав кунхине тул çутăлнă-çутăлманах Ереван хулинчи суйлав участкисене утнă. Кашнийех хăйĕн граждăн тивĕçлĕхне пуринчен малтан пурнăçа кĕртесшĕн — бÿллетене пуринчен малтан суйлав урнине йарасшăн.

Кирăв йачĕпе тăракан синтетически каучук комбиначĕн културăпа кану паркĕ. Кунта 1-мĕш номерлĕ „СК“ суйлав округĕн тăваттăмĕш суйлав участки, унта Армйан СС Республикĕн Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата Иосиф Виссарионăвич Сталина регистрациленĕ. Лайăххăн çутăлса та çитмен, анчах парка суйлавçăсем çĕршерĕн пухăннă та ĕнтĕ. Вĕсен хисепĕ минутсерен ÿсет. Çынсем автомобилсемпе, трамвайсем çине ларса тата велосипедсемпе пыраççĕ. Вĕсем чи илемлĕ минутсене хаваслanса кĕтеççĕ. Кашнин пит-куçĕ çинче телейлĕ хаваслăх.

— Епĕр Сталиншăн сасăлатпăр! Йуратнă çулпуç йачĕпе бÿллетене пуринчен малтан йама синтетически каучук комбиначĕнчи карбит цехĕнчи стахановĕц Алексан Саакович Авдаљан телейлĕ пулнă.

Суйлавçăсем пĕрин хыççăн тепри суйлав урнисем патне пыраççĕ. Акă комбинатри пĕрремĕш участкăри палла стахановĕц Дмитрий Жаринăв сасăлать. Ун хыççăн çамрăк суйлавçă—комбинатри механичĕски цехри рабочи Колйа Вермишйан, библиотекăршă Рапсик Алексаљан, Унан Григорйан кочегар çемйи пыраççĕ...

(ТАСС).

Молотăв йулташ баллотировкăра тăракан суйлав округĕнче

ЕРЕВАН, ийунĕн 12-мĕш.(ТАСС). Амернак Оганеçан хăйне хăй тыткалама пĕлнипе палла çын. Çак ийунĕн 12-мĕшĕнче—историлĕ кун—(ирхине ирех хумханать вăл, вĕçĕм сĕр сехет çине пăхать.

Акă, йулашкинчен, вăхăт ултă сехет çитесси пилĕк минут çеç йулнă. Гедорчайски суйлав округĕнчи иккĕмĕш участкăри суйлав комиççи председателĕ Оганеçан суйлав йешчĕкне пичетлесе хурать. Ирхине шăпах ултă сехетре вăл суйлав участкин малти пÿлĕмне тухать. Вăл пÿлĕме çĕр çынна йахăн пухăннă та ĕнтĕ. Суйлавçăсене пĕтĕм халăхăн пысăк праçникĕ йачĕпе ырă сунать, председател вĕсене вăрттăн сасăлама тытăнма чĕнет.

Çамрăк слесăр Çарегин Сетракйан, Севан Зангастройри комсомол комитечĕн секретарĕ, уйăх çура кайала Севан Зангасртойра ĕçлекенсен коллективĕн пухăвĕнче Молотăв йулташа Армйан ССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата палăртнă. Ийунĕн 12-мĕшĕнче хăй палăртнă кандидатшăн чи малтан сасăланă.

Суйлавçăсем суйлав урни патне татти-сыпписĕр пынă. Суйлав участкисенче кăнтăрла тĕлнеле суйлавçăсем çурри ытла сасăланă.

В. Стенберг художник ÿкернĕ плакат. ИЗОГИЗ кăларнă.
(Сойузфото).

Д. Йа. Митков йулташ хăйĕн суйлавçисем патĕнче

ЕЛĔК, ийунĕн 13-мĕшĕ, (телефонпа). Ийунĕн 12-мĕшĕнче Мăн Вылари суйлавçăсен суйлав умĕнхи пухăвĕ пулса иртрĕ. Пухура 300 çын ытла пулчĕç. Чи малтанах Мăн Выла шкулĕн учителĕ довереннăй Ванин йулташ тухса каларĕ.

Ванин йулташ сăмахĕнчен

Йулташсем! Епĕр Мăн Выла йалĕнчи суйлавçăсем пайан, ийунĕн 12-мĕшĕнче, ССР Сойузĕн Верховнăй Советне суйлани шăп ултă уйăх тултарнă кун, Чăваш АССР Верховнăй Советне суйлама Шĕмшевĕш округĕ тăрăх тăратнă кандидатпа Д. Йа. Митков йулташпа паллашма пухăнтăмăр.

Ĕлĕкхи вăхăтра пирĕн чăваш халăхĕ суйлав правипе усă курман. Чăваш ĕççыннисем ăçта та пулин суйланма тивĕççĕр пулнă. Сталинла çĕнĕ Конституци пире, чăвашсене, ытти халăхсемпе пĕрлех, пĕртан правапа усă курма ирĕк пачĕ. Çав правапа усă курса, епĕр ССРС Верховнăй Советне суйларăмăр, халĕ РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсене суйлама хатĕрленсе пыратпăр.

Епĕ ийунĕн 26-мĕшĕнче ĕçхалăхĕн паттăр ывăлĕсемшĕн — Дубăвпа Митков йулташсемшĕн хамăн саса паратăп. Çакăнта ларакан йулташсене пурне те Дубăвпа Митков йулташсемшĕн сасăлама чĕнетĕп.

Митков йулташ сăмахĕнчен

Йулташсем! РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсене суйламали Мăн Выла суйлав участкинчи суйлавçăсем, сире пурне те. Чăваш АССР Верховнăй Советне суйлама Шĕмшевĕш суйлав округĕ тăрăх манăн кандидатурăна тăратнăшăн тав тăватăп. Суйлавçăсем, есĕр мана шанса кандидата тăратрăр, епĕ есĕр шаннине тивĕçлине хамăн ĕçпе кăтартăп. Коммунисла парти тĕп çулĕнчен ниçта пăрăнмасăр, халăх тăшманĕсене çапса хуçса, колхозсене вăйлатса пырса, колхозниксене пуйан та културлă пурăнакан тăвассишĕн, халиччен ĕçленĕ пекех, тăрăшса ĕçлĕп. Кирлĕ пулсан, ĕçхалах ирĕкĕшĕн йулашки йунăма пама та хатĕр!

* * *

Пухури суйлавçăсем ийунĕн 26-мĕшĕнче пурте Дубăвпа Митков йулташсемшĕн сасăлама пулса, унччен государствă умĕнчи пур парăмсене парса татса, суйлава пысăк çитĕнÿсемпе кĕтсе илме пулса резолюци йышăнчĕç.

КИТАЙРИ ВĂРÇĂ

Халхи вăхăтра Китайра вăрçă ĕçĕсем çак районсенче пулса пыраççĕ: Хенан провинцин тÿремлĕхĕнче, унпа хутăш Шенси (Çурçĕр Китай) провинцинче, Чжецзйан провинцин çурçĕр пайĕнче тата Анхуей провинцин кăнтăр пайĕнче, Йанцзы йуханшывĕнчен (Вăтам Китай) кăнтăрала.

Йапонĕцсем Хенан провинцинче кăна наступлени туса пыраççĕ. Китай çарĕсем вĕсене хирĕç калама çук хыттăн тăраççĕ. Çав провинцин столицине—Кайфын хулине туртса илсе, Йапони çарĕсем, Çуйчжоуна тытса илнĕ чухне пысăк çухатусем тунăскерсем, халĕ хăйсен фрончĕн линине вăрăма тăсса йанă, çавна пула вĕсен фрончĕ хыттăнах вăйсăрланнă. Китайĕцсем Хуанхе йуханшывĕ çинчи çула сирпĕтсе аркатнă пирки, йапонĕцсем йышăннă хула йĕри-тавра—Чженчжоу йĕри-тавра çапăçусем пыракан района йалтах шыв илсе лартма пуçланă. Çакă вăл йапонĕцсене малала кайма йăварлатать.

Вăтам Китайра Йапонин тинĕс çинчи вăйĕсем, Йанцзы йуханшывĕ тăрăх малала кайас шутпа Уху хулинчен кăнтăр-хĕвеланăç йĕнчи районта пысăк çапăçусене хатĕрленеççĕ.

Йапони авиацийĕ Кантон çине (Кăнтăр Китай) бомбăсем пăрахма халĕ те чарăнмасть. Кантон патĕнче, Китайăн кăнтăр çыранĕсенче Йапони çар карапĕсем пурĕ 20 ытла тăраççĕ.

Китай партизанĕсем йапонĕцсен тылĕнче халĕ те активлăн вăрçаççĕ.

Хебей провинцинче (Çурçĕр Китай) 17 уйĕса пĕтĕмпех Китай партизанĕсем контролĕ туса тăраççĕ. Çав уйĕссенче партизансем хăйсен правителствине организациленĕ, вăл Китайăн тĕп правителствин хушăвĕсемпе килĕшÿлĕн ĕçлесе пырать. Çав уйĕссенче 7 мĕлйун çын ытла пурăнать. Пысăкрах уйĕссем пĕр-пĕринпе телефон тăрăх сыхăну тытаççĕ. Партизансен аллинче—автомобил транспăрчĕ те пур, ăна вĕсем йапонĕцсенчен туртса илнĕ. Партизансем кунта пысăках мар арçеналсем 12 организациленĕ. Çавăн пекех вĕсем 900 шкул организациленĕ. Унта çар шкулĕ те пур, вăл шкул хресченсене вăрçă ĕçне вĕрентес тĕлĕшпе ĕçлесе пырать. Çав районта халĕ сахалтан та 500 пин хресчен вăрçă ĕçне вĕренет. Партизансем хăйсен районĕн чиккисене çивĕччĕн сыхлаççĕ.

Китай çарĕ, пĕтĕм халăх пулăшса пынипе, Йапони захватчикĕсемпе çапăçнă çĕрте çирĕпленсе пырать. Мирлĕ халăха тискĕррĕн асаплантарни, мирлĕ хуласем çине тискеррĕн бомбăсем пăрахни вăл—Йапони военщинин вăйсăрлăхне; Китай халăхне çĕнтерме пултарайманнине çеç кăтартса парать.

(ТАСС).

Хамăр сасăсене тăван çĕршывăн чи лайăх ывăл-хĕрĕсемшĕн парар!

Петр Степанăвич ПОЛТЕВ—ПСК(б)П Чăваш Обкомĕн йертсе пыракан парторгăнсен пайĕн пуçлăхĕ.

Йетĕрне районĕнчи 20-мĕш №-лĕ Хучаш суйлав округĕнче Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата регистрациленĕ.

Николай Павлăвич ПАВЛАВ—ПСК(б)П Чăваш Обкомĕн çекретарĕ.

46-мĕш №-лĕ Вăрнар суйлав округĕнче Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата регистрациленĕ.

Йефроçиния Харитоновна ХАРИТОНАВА — Вăрнарти машина-трактăрла станцинчи хĕрарăмсен трактăр бригадин бригадирĕ.

Вăрнар районĕнчи 47-мĕш №-лĕ Уравăш суйлав округĕнче Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата регистрациленĕ.

Йевгени Иванăвич ОДИНЦОВ — ПСК(б)П Чăваш Обкомĕн советпа сутуилӳ пайĕн инструктăрĕ.

Сĕнтĕрвăрри районĕнчи 15-мĕш №-лĕ Наратчакки суйлав округĕнче Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата регистрациленĕ.

Федăр Максимăвич ВАГАНАВ—Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çумĕнчи Çулйĕр управлени начаљникĕ (халиччен Ошосдоран 241-мĕш №-лĕ çулйĕр участкин начаљникĕ пулнă).

Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Йетĕрне 18-мĕш №-лĕ хула суйлав округĕнче кандидата регистрациленĕ.

Прасковйа Иванăвна НОВИКАВА—Лобачеврăи пуçламĕш шкулти учителница.

Пăрачкав районĕнчи 70-мĕш №-лĕ Рйабина суйлав округĕнче Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата регистрациленĕ.

Павел Йакăвлĕвич САМАРИН

Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Вăрмар суйлав округĕнче регистрациленĕ кандидат

Павел Йакăвлĕвич Самарин йулташ 1895 çулта, Патăрйел районĕнчи Каçал йалĕнчи хресчен çемйинче çуралнă. 1915 çулччен вăл çуллахи вăхăтра йалхуçалăхĕнче ĕçленĕ, хĕлле шкулта вĕреннĕ. 1915 çулта Хусан кĕперничи Тетĕш хулинчи педагогикă курсĕнче вĕренсе, йалти учител йатне илнĕ. 1915 çулхи май уйăхĕнчен 1917 çулхи декабĕр уйăхĕччен патша çарĕнче пулнă. 1918 çулхи октăбĕр уйăхĕнче Хĕрлĕ Çара кайнă. Унтан 1923 çулта таврăннă. Хĕрлĕ Çарта вăл йертсе пыракан политикăлă ĕçсенче пулнă: ротă командирĕн помощникĕ, ротă командирĕ, полк комиссарĕн помощникĕ. Колчак, Врангĕл, Махно çарĕсемпе, ытти шур генералсен çарĕсемпе тата Латви шур çарĕсемпе çапăçнă çĕрте пулнă.

Çав шур генералсен çарĕсемпе çапăçнă çĕрте амансан киле таврăнаť. 1919 çулта отпуск вăхăтĕнче коммуниссен Каçал вулăсĕнчи организацинче ĕçлет. Малтанах вăл Каçал вулăсĕнчи коммунисла организаци йачейкин çекретарĕ. Унтан коммунисла партин Патăрйел уйесĕнчи комитетĕче инструктăр, оргпай пуçлăхĕ тата уйесри çĕрĕç тытăмĕн пуçлăхĕ пулса ĕçлет.

1925 çулхи йанвартен 1926 çулхи февраљ уйăхĕччен коммуниссен Патăрйел уйесĕнчи комитечĕн çекретарĕ, 1926 çулхи февраљтен 1927 çулхи йанварччен коммуниссен Çĕрпӳ уйес комитечĕн çекретарĕ, унтан 1930 çулччен ПСК(б)П Чăваш Обкомĕн оргпай пуçлăхĕ. 1930 çулхи йанвартен 1931 çулхи февраљччен Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председателĕ.

1931 çулхи февраљтен 1933 çулхи апрелччен Самарин йулташ Мускаври плановой академинче вĕреннĕ.

1933 çулхи апрелтен 1937 çулхи апрелччен государствăн тырпул тупăшĕ мĕнле пулнине сăнакан Куйбышĕври комиççинче ĕçлет.

П. Й. Самарин йулташ 1937 çулхи иуњ уйăхĕнчен пуçласа Чăваш АССР Вырăнти промышлĕнăç Халăх Комиссарĕ пулса ĕçлет.

Самарин йулташ пур вырăнта та Ленин—Сталин парти çулйĕрĕнчен пĕр пăрăнмасăр, тӳррĕн ĕçлесе пынă. Вăл халăх хушшинче пысăк шанăç илнĕ. Ăна халăх шанаť. Вăл хастарлă, ĕçре пуçарулă, тӳрĕ, шанчăклă çын.

Халĕ Павел Йакăвлĕвич Самарин йулташа Вăрмар суйлав округĕнчи суйлавçăсем Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата тăратрĕç.

Унăн кандидатурине Вăрмар суйлав округĕнчи суйлав комиççи регистрациленĕ.

Анастаçийă Макçимăвна ГРИШИНĂ

Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Çийавă суйлав округĕнче регистрациленĕ кандидат

Анастаçийă Макçимăвна Гришина йулташ 1917 çулта Пăрачкав районĕнчи Выползăвă йалĕнчи чухăн хресчен çемйинче çуралнă.

Гришина йулташ 1936 çулта трактăриссен районри 6 уйăхлăх курсĕнчен вĕренсе тухнă. Вăл трактăриссен курсĕнчен вĕренсе тухнăранпах Пăрачкаври машинă-трактăрлă станцинче трактăрискă пулса стаханăвла ĕçлет.

1936 çулта хăйĕн трактăрĕпе 300 гектар сухалас вырăнне 350 гектар сухаланă. 1937 çулта та планпа 300 гектар вырăнне 428 гектар сухаланă, 755 килограм горйучи перекетлесе хăварнă.

Кăçал вăл гусеницăлă пĕр трактăрпа 1200 гектар, бригадăри 3 трактăрпа 3600 гектар сухалама, горйучине 10 процент перекетлесе хăварма, трактăрсене ремонтламали укçа-тенкĕне 8 процент перекетлесе хăварма обйазателства илнĕ. Çакăн пек обйазателства илсе вăл ытти бригадăсене социалисăмла ăмăртăва чĕннĕ.

Гришина йулташăн шанчăклăхне пĕлсе Çийавă суйлав округĕнчи суйлавçăсем ăна Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата тăратнă. Анастаçийă Макçимăвна Гришина йулташ кандидатурине Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Çийавă суйлав округ комиççийĕ регистрациленĕ.

Иван Ваçилйĕвич ДУБĂВ

РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама Вăрнар суйлав округĕнче тата Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Кӳнеç суйлав округĕнче регистрациленĕ кандидат

Елĕк районĕнчи „1-мĕш май", Вăрнар районĕнчи Молăтăв йачĕпе тăракан тата Трак районĕнчи „Хĕрлĕ çăлтăр" колхозри колхозниксемпе колхозницăсем, хăйсен пĕрлехи пухăвĕсенче, РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама Вăрнар суйлав округĕнчен ПСК(б)П Чăваш Обком çекретарне Иван Ваçилйĕвич Дубăв йулташа палăртрĕç.

Çавăн пекех тата Шупашкар районĕнчи „1-мĕш май" колхозри колхозниксем Иван Ваçилйĕвич Дубăв йулташа Кӳкеçри 4-мĕш номĕрлĕ суйлав округĕ тăрăх Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата тăратрĕç.

Иван Ваçилйĕвич Дубăв 1904 çулта, Горкий облаçĕнчи Варнавински районра, Богородск йалĕнче вăтам хресчен çемйинче çуралнă. Дубăв йулташ 1923 çулччен йалхуçалăхĕнче ĕçленĕ.

1921 çултанпа Дубăв йулташ совет ĕçне тата общĕствăлă-политикăлă ĕçе активлăн хутшăнаť. 1923 çулта Дубăв йулташа Богородск вулĕçтăвком президиумĕн членне суйлаççĕ, вăл унта 1924 çулхи февраљ уйăхĕччен ĕçлет. 1925 çулччен Богородск йалсовет председателĕ пулса ĕçлет. 1925 çултан пуçласа 1929 çулччен,—тăватă çул ытларах,—Дубăв йулташ Çамрăксен Ленинла Коммунисла Сойузĕнче йертсе пыракан вырăнсенче ĕçлет. Дубăв йулташ 1928 çулхи çентăбĕр уйăхĕнче ПСК(б) Парти ретне кĕнĕ.

1929 çулта Дубăв йулташ парти ĕçне куçаť. 1929 çултан пуçласа вăл—ПСК(б)П Урен райкомĕн çекретарĕ. 1930 çултан пуçласа 1933 çулччен ПСК(б)П Шабалинск райкомĕн çекретарĕ, 1933 çултан пуçласа 1935 çулччен ПСК(б)П Омутнинск райкомĕн çекретарĕ. 1936 çултан пуçласа Дубăв йулташ ПСК(б)П Малмыш райкомĕн çекретарĕ. 1937 çулхи декабĕр уйăхĕнче парти Тĕпкомĕ Дубăв йулташа Чăваш республĕкне йачĕ. Кунта вăл ПСК(б)П Чăваш Обком çекретарĕ пулса ĕçлет.

Çапла Дубăв йулташ нумай çулсем хушши комсомол ĕçĕнче тата парти ĕçĕнче йертсе пыракан вырăнсенче ĕçлет. Вăл пирĕн социалисăмлă çĕршыв ĕçĕшĕн, Ленинăн—Сталинăн аслă партин ĕçĕшĕн, халăх тăшманĕсене хирĕç çирĕп, пĕр шеллемесĕр кĕрешсе пыраť.

Дубăв йулташ политикăлă ответлă ĕçсенче тĕрĕсленнĕ çирĕп бољшевик. Парти ĕçĕнче вунă çула йахăн пĕр улшăнмасăр ĕçлесе, вăл—партин тăп çулйĕрĕшĕн бољшевикла кĕрешме пĕлнине тата партипе халăхăн тăшманĕсене пĕр хĕрхенмесĕр кăкласа тăпăлтарса пынине кăтартрĕ.

Суйлавçă йулташсем! РСФСР Верховнăй Совет депутатне суйлама палăртнă кандидатшăн, рабочисемпе хресченсен телейĕшĕн çирĕп те чĕререн парăнса кĕрешекен бољшевикшăн—Иван Ваçилйĕвич Дубăв йулташшăн сасăлăр!

„Кам хамăр çĕршыв малашне те ирĕклĕ социалисăмлă державă пултăр тесе тăрăшаť, вăл бољшевиксен партийĕшĕн сасăлĕ, вăл коммуниссемпе партире тăманнисен блок кандидачĕсемшĕн сасăлĕ".

Иван Петрович ПЕТРОВ

Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Мăнçырма суйлав округĕнче регистрациленĕ кандидат

Иван Петрович Петров йулташ 1902 çулта Çĕрпӳ районĕнчи Пысăк Чăрăш йалĕнчи чухăн хресчен çемйинче çуралнă. 1920 çулта Чăрăшри ,икĕ класлă шкултан вĕренсе тухнă. 1921 çултан 1928 çулччен Атăл çинчи пăрахутсем çинче матрусра ĕçленĕ.

1929 çулта Петров йулташ Пысăк Чăрăш йалсовет председателĕ, çак вăхăтрах Йамаш йалсоветĕнчи ПСК(б)П йачейкин çекретарĕ. 1930 çулта ăна Çĕрпӳ райколхозсойузĕн правлени членĕ пулса ĕçлеме куçарнă. Кунта вăл 1931 çулхи кĕркуннеччен ĕçлет.

1931 çулта Петров йулташ Çĕрпӳ районĕнчи Сталин йачĕпе тăракан коммунăри ПСК(б)П йачейкин çекретарĕ тата вулав çурчĕн пуçлăхĕ пулса ĕçлет.

1932—33 çулсенче Шупашкарта маркçисăмпа ленинисăм курсĕнче вĕренет. Курсра вĕренсе тухсан, Канаш районĕнче Ĕçлекенсемпе Хресченсен Инспекцинче, унтан ПСК(б)П Канаш райком инструктăрĕ пулса ĕçлет.

1936 çулхи декабĕрте ПСК(б)П Вăрмар райкомне ĕçлеме куçараççĕ, унта вăл ПСК(б)П райком çекретарĕн замеçтителĕ, унтан райкомăн иккĕмĕш çекретарĕ.

1937 çулхи декабĕртен пайанхи кунччен Вăрмар район ĕçтăвком председателĕ пулса ĕçлет.

Петров йулташ пур ĕçре те Ленин—Сталин партийĕ кăтартнă тăрăх тӳррĕн ĕçлет, халăх тăшманĕсемпе пĕр хĕрхенӳсĕр кĕрешсе пынă, кĕрешет те. Петров йулташ вăл ĕçре шанчăклă, активлă çын. Унăн ашшĕ-амăшĕсем 1929 çултанпа колхозра тăраççĕ. Петров йулташ 1928 çултанпа ПСК(б)Парти членĕ.

Иван Петрович Петров йулташ кандидатурине Вăрмар районĕнчи Мăнçырма суйлав округĕнчи суйлавçăсем хăйсен суйлав умĕнхи пухăвĕсенче пурте пĕр кăмăллă пулса, Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата тăратрĕç.

Антонăвă, Йениçейĕв, Григорйĕвă, Иванов йулташсем хăйсен суйлавçисем патĕнче

ШĂХАСАН. Кăнтăрла иртсен 3 сехĕтре доверĕннăйсемпе агитатăрсен колонни пĕр харăс утса хĕрлĕ площчĕте çитрĕ. Трибунă çинче РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама регистрациленĕ кандидат Йекатеринă Антонăвна тата профком председателĕ Иванов йулташсем тăраççĕ. Вĕсем патне ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйлама регистрациленĕ кандидатсем—Григорйĕвă, Йениçейĕв тата Иванов йулташсем пырса тăчĕç.

Площчĕт район центрĕнчи ĕççыннисемпе тулчĕ. Парти райком çекретарĕ Никитин йулташ митинга уçрĕ. Чи малтанах вăл РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама регистрациленĕ кандидат Йекатеринă Антонăвă йулташа сăмах пачĕ.

Антонăвă йулташ сăмахĕнчен

—Йулташсем! Есĕр мана РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата тăратнăшăн, мана хисеп тунăшăн, çав тери хаваслăхпа савăнса сире тав тăватăп. (Ала çупаççĕ. Площчĕтре: Сывă пултăр халăхсен йуратнă çулпуçĕ Сталин! Ур-ра!—кăшкăраççĕ).

... Епĕ Октăбĕр тантăшĕ: 1917 çулта çуралнă. Телейлĕ Сталин саманинче çуралса ӳссе, çав тери чаплă çĕршывăн хисеплĕ хĕрĕ пултăм.

1935 çултанпа Канашри савăтра ĕçлеме тытăнтăм. Мана рабочисен çемйи пăхса çитĕнтерчĕ. Курсра вĕреннĕ чухне маçтăр пысăк тимлĕхпе ĕçе вĕрентрĕ. Малтан план, ĕç норми мĕн иккенне те ăнланман епĕ, мĕнле план çинчен калаçаť ку маçтăр, тесе шухăшласа тĕлĕнеттĕм. Вара ĕç планне 200—250 процент тултарса пыракан пултăм. Халĕ те çаплах ĕçлетĕп. Сирĕн шанчăк пысăк чыс пулнине шута илсе, малашне нормăна тепĕр хут иртерсе тултарма сăмах паратăп... Лайăх ĕçшĕн сахал мар савăнăç куртăм, премисем илтĕм, кану çурчĕсенче пултăм. 1936 çултанпа епĕ Канаш хули совечĕн членĕ. Общĕствăлă ĕççенче хастарлă ĕçлетĕп. Кăçал мана комсомол ретне илчĕç.

Мана есĕр государствă ĕçне шанса паратăр, вăл чыс—тăван халăх чысĕ. Çавăнпа епĕ ăна ĕçпе ответлеме сăмах паратăп.

Сывă пултăр коммуниссен партийĕ.

Сывă пултăр Чăваш республикĕн Верховнăй Совечĕн депутатне суйламали пĕрремĕш кандидат Иосиф Виссарионăвич Сталин йулташ! (Тăвăллăн ала çупаççĕ. „Ур-ра" кăшкăраççĕ).

Григорйĕвă йулташ сăмахĕнчен

— Епĕр сирĕнпе пĕрле, алăсене хĕрлĕ йалавсем тытса, пысăк ĕç тума пухăнтăмăр. Пайанхи пурнăç—Октăбĕр револуцин ырлăхĕ, ăна Ленин—Сталин партийĕ туса пачĕ.

Епĕ 31-мĕш çул ĕнтĕ халăх учителĕ пулса ĕçлетĕп. Ĕçре нихăçан та хам вăй-хала шеллĕмен, малашне те хамăн пĕтĕм вăйа хурса ĕçлесе, сирĕн шанчăка ĕçпе ответлĕп.

Сывă пултăр коммуниссен партийĕ!

Сывă пулччăр суйлавçăсем!

Сывă пултăр халăхсен аслăран та аслă, йуратнă çулпуçĕ Сталин! (Тăвăллăн ала çупаççĕ. „Урра" кăшкăраççĕ).

Йениçейĕв йулташ сăмахĕнчен

— Епĕ халăхсен телейлĕ пурнăçĕшĕн 27 çул хушши производствăра ĕçлерĕм. 20 çул хушши партинче тăратăп. Ленин—Сталин партийĕ йертсе пынипе ӳссе çитĕнсе, йаланах тӳррĕн ĕçлерĕм, малашне те хамăн ĕçри хастарлăха, пĕлĕве, халăхсен телейлĕ пурнăçĕшĕн кĕрешес ĕçе паратăп...

* *

Йулашкинчен митинг Шăхасан районĕнчи пĕтĕм суйлавçăсене суйлав кунĕ—ийунĕн 26-мĕшĕнче РСФСР Верховнăй Совечĕн депутачĕ пулма кандидата регистрациленĕ Йекатеринă Антонăвă йулташшăн тата Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама регистрациленĕ кандидатсемшĕн —ПСК(б) Парти Тĕпком çекретарĕ Андрей Андрейĕвич Андрейĕв йулташшăн, Маťшӳри пуçламĕш шкул директăрĕ—Григорйĕвăшăн, МТС директăрĕ—Йениçейĕвшăн, Уйкас Кипек йалсовет председалĕлĕ Ивановшăн сасăлама чĕнсе резољуци йышăнчĕ.

Леонти Острйаковпа Аннă Михайлăвă йулташсем хăйсен суйлавçисем патĕнче

ПАТĂРЙЕЛ, (телефон тăрăх). Политикăлă пысăк çĕкленӳпе районри колхозсенче суйлав умĕнхи пухусем пулса иртеççĕ. Ку пухусенче РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсене депутата суйлама палăртнă кандидатсемпе суйлавçăсем ăшшăн тĕл пулса кăмăллă калаçусем ирттереççĕ.

Кивĕ Ахпӳртри „РОКК" тата „Канаш" колхозсенче РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата тăратнă Леонтий Давыдăвич Острйаков йулташа тата Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама палăртнă Анна Михайлăвна Михайлăва йулташа 50 колхозник ытла хĕрлĕ йалавсемпе тухса кĕтсе илчĕç.

— Пысăк тав сире, йулташсем, пире çав тери хисеп тунăшăн, терĕ Острйаков йулташ. Ăна суйлавçăсем пурте пĕр харăс „урра" кăшкăрса саламларĕç.

300 çын ытла пынă пухува „РОКК" колхоз председателĕ Арланăв йулташ уçрĕ. Пухура РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата тăратнă Острйаков тата Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата тăратнă Михайлăвă йулташсем сăмах тухса калаçрĕç.

Острйаков йулташ сăмахĕнчен

— Сире, колхозниксене, колхозницăсене, ĕççынни йединоличниксене, ман çине çав тери пысăк шанăç хунăшăн чĕререн саламлатăп. Сирĕн шанăçа пĕтĕм вăйа хурса ĕçленипе вырăна кĕртĕп. Вăйлă тырпул туса илес тĕлĕшпе лайăх ĕçленĕшĕн мана партипе правителствă Ленин орденĕ парса наградăланă. Йулташсем, манăн ĕлĕкхи пусмăрлă саманапа халљхи телейлĕ те савăнăçлă саманана танлаштарса кăтартас килет. Ĕлĕк пулсан „наградăна" пусмăрта пурăнакан халăхсене вăйлăрах асаплантарнăшăн параччĕç. Халĕ халăхшăн, халăх пурнăçне йуçас тĕлĕшпе вăйа хурса ĕçленĕшĕн параççĕ. Епĕ Ленин орденне пĕччен илмен, манăн орден вăл пĕтĕм колхозниксен хисеплĕ ĕçĕ. 1934 çулта пирĕн колхоз нихăçан пулман вăйлă тырпул туса илчĕ пулсан, халĕ пирĕнни пек колхозсем районра 30 ытла шутланаççĕ. Сталин йулташ вăйлă тырпулшăн кĕрешме чĕннине колхозниксем пĕтĕм вăйа хурса пурнăçласа пыраççĕ. Епĕ малашне те тăрăшса ĕçлесе, хамăн опытсене йаланах сире парăп. Епĕ сире вăйлă тырпулшăн кĕрешме чĕнетĕп. Сывă пулччăр колхозниксем, колхозницăсем! Сывă пултăр пире савăнăçлă пурнăç туса паракан Сталин йулташ!

Михайлăвă йулташ сăмахĕнчен

— Йулташсем! Есĕр ман çине пысăк шанăç хунăшăн чĕререн тав тăватăп. Епĕ пысăк ĕççенче ĕçлесе пурăнман, анчах колхоза çирĕплетессишĕн, колхозниксен пуйан та савăнăçлă пурнăçĕшĕн вăйа хурса, пĕтĕм чĕререн тăрăшса ĕçлерĕм. Тăшмансем пирĕн колхоза салатса йаричченех сийен турĕç. Виçĕ хуçалăхпа йулнă колхоза йертсе пыма мана, 18 çулхи хĕрачана, колхоз председателне суйларĕç. Колхоза ура çине тăратассишĕн сахал мар вăйа хутăм. Колхозниксен хаваслă пурнăçĕшĕн тăрăшрăм. Халĕ пирĕн колхоз вăйсăр мар.

Суйлава хатĕрленнĕ май епĕ сире, йулташсем, государствă умĕнчи пур парăмсене парса татса, суйлава пысăк çĕнтерӳсемпе кĕтсе илме чĕнетĕп. Хамăрăн государствăна çирĕплетсе пырăпăр, нимĕнле тăшмантан та шикленмелле мар пултăр. Сирĕн шанăçа ĕçпе пурнăçлама пулатăп. Йаланах сирĕн çывăх çын пулса, сирĕнпе таччăн çыхăнса ĕçлеме сăмах паратăп. Сывă пултăр пирĕн аслă çулпуç Сталин йулташ!

Тырпулсене пуҫтарса кĕртме халех хатĕрленмеле

Утă ҫулас вăхăт ҫывхарса килет. Анчах Тăвай районĕнчи колхозсем ку ĕҫе тивĕҫлипе хатĕрленмеҫҫĕ. Районри колхозсенче утă ҫулмали машинăсемпе жнейкăсем пурĕ 126, анчах вĕсене ку вăхăтченех йусама тытăнман. Ҫавăн пекех нумай колхозсенче ҫавасем, лапаткасем ҫитмеҫҫĕ. Суту-илӳ организацисем ҫак йапаласене хаљ те кӳрсе килмеҫҫĕ. Чылай колхозсенче тимĕрҫĕсем кăмрăк ҫуккипе ĕҫсĕр лараҫҫĕ.

Тăвай районĕнче тырпулсене уйран пуҫтарса кĕме хатĕрленес ĕҫ те йапăх пырат. Кăҫал колхозсен уйхирĕнче 9 комбайн ĕҫлемеле. Анчах колхозсем михĕсем, йешчĕксем, шăналăксем хатĕрлемеҫҫĕ-ха. Тĕмер тата Кармал колхозĕсем иртнĕ ҫулта комбайнпа вырнă участкăсенчи улăм куписене хаљ те пуҫтарса тасатман.

Районри 33 колхозран пĕри те витнĕ итемсене йусама, вĕсене улăмсенчен тасатма тытăнман. Ҫавнашкалах лаша кӳлмели хатĕрсене, урапасене йусас ĕҫ те пуҫланманпа пĕрех. Ҫĕн Ҫырма, Чӳксырми, Уљанкă, Вăрманхĕрри колхозĕсенче кашни лашана кӳлме урапасем ҫитмеҫҫĕ. „Хĕрлĕ Сормовă" колхозра икĕ лаша пуҫне пĕр урапа ҫеҫ. Лашасене кӳлмели хатĕрсем те ҫитмеҫҫĕ.

Тăвай райҫĕрĕҫ пайĕн тырпулсене уйран пуҫтарса кĕме хатĕрленес ĕҫре колхозсене тĕплĕн пулăшса, йертсе пымала.

В. Илйин.

Ҫумкурăксемпе кĕрешес ĕҫ начар сарăлса пырат

ЕЛĔК. Колхозсен уйхирĕсенче кĕрхи тырăсемпе ҫуртри калчисем пит лайăх ҫитĕнеҫҫĕ. Анчах, районра уйри калчасене ҫумкурăксенчен тасатас ĕҫ ҫителĕксĕр пулса пырат-ха. Чылай колхозсенче ҫумкурăксемпе ҫине тăрса кĕрешмеҫҫĕ. Вăрлăхлăх хăварнă клевĕр участкине уйрăмăнах таса тытса тăмала. Апла пулсан та, ку вăхăтчен 700 гектартан 265 гектар ҫеҫ ҫумкурăксенчен тасатнă. Районра кĕрхи тулă калчисене 1300 гектартан 559 гектар ҫинче ҫеҫ ҫумланă.

Районра малта пыракан колхозсем вăйлă тырпулшăн кĕрешĕве чăн-чăнах анлăн пуҫарса пыраҫҫĕ. Мăн Шĕвĕшри „Правда" колхозра кĕрхи тата ҫурхи тыră каличисене пĕтĕмпех пĕр хутчен ҫумкурăксенчен тасатса тухнă. Анаткасри Калинин йачĕпе тăракан колхозра та тухнă пек ҫумкурăксене ҫумласах тăраҫҫĕ. Ку колхозра ҫумкурăксене ҫумлас ĕҫе уйрăм звеносем туса тăраҫҫĕ.

Елĕк, Йулаш, Теҫи, Ураскиљт тата Панкли йалсоветне кĕрекен колхозсенче ҫумкурăксемпе кĕрешме пачах тытăнман-ха. Йалсовет тата колхоз руководителĕсем ҫак пысăк та ответлă ĕҫ ҫине ҫийелтен пăхаҫҫĕ.

Матăк тата Вăрманкас йалсовечĕсенчи колхозсенче кĕрхи тулă калчисем ҫинче ыраш калчисем нумай пулсан та, вĕсене ҫаплах ҫумламаҫҫĕ.

Елĕк районĕнчи колхозсенчи тырпулсене уйран пуҫтарса кĕме хатĕрленес ĕҫ вăрахăн пырат. Нумай колхозсем хаклă вăхăта усăсăр иртереҫҫĕ. Районĕпе жнейкăсем 222, вĕсенчен 77 жнейкăна, тата утă ҫулмали 41 машинăран 4-шне ҫеҫ йусанă.

Тушкасси, Тури Панкли, Исментер колхозĕсен председателĕсем: „Вăхăт пур-ха, тăвăпăр", тесе хăйсене хăйсем лăплантараҫҫĕ.

Ҫум ҫумлас тата тырпулсене уйран пуҫтарса кĕме хатĕрленес ĕҫсене ҫĕрĕҫ оргăнĕсен, йалсовет тата колхоз председателĕсен татăклăн йертсе пымала.

Ф. Филиппăв.

Шупашкар районĕ мала тухнă

Кăҫалхи ҫул вăйлă тырпул туса илес тĕлĕшпе Ишлей районĕ Шупашкар районĕпе ăмăртат. Ҫуракине вĕҫленĕ хыҫҫăн, ăмăртса ĕҫлекен районсем пĕр-пĕрин ĕҫĕсене тĕрĕслесе тухрĕҫ. Социалисăмла ăмăртун малтанхи тапхăрĕнче Шупашкар районĕ мала тухни палăрчĕ. Шупашкар районĕнчи колхозсем ака ĕҫне пысăк пахалăхпа иртернĕ. Чучукассинчи Молăтăв йачĕпе тăракан колхоз вăйлă тырпулшăн тăрăшса ĕҫлет. Кунта парник хуҫалăхне пысăк вырăна хураҫҫĕ.

Ишлей районĕнчи хăшпĕр колхозсенче агротехникăла ĕҫсене йачĕшĕн кăна туса иртернĕ. Район вăрлăхсене йаровизацилесе акмали плана 57 процент, мулчировани тумали плана 80 процент, калчасене апат парас плана 39 процент кăна тултарнă.

Ишлейри машинă-трактăрлă станци ҫуракинче начар ĕҫлерĕ: кашни трактăр пуҫне 67-шер гектар ҫеҫ сухаланă.

Ăмăртса ĕҫлекен Ишлей тата Шупашкар районĕсенче тырпулсене уйран пуҫтарса кĕме хатĕрленес ĕҫсем йулса пыраҫҫĕ. Икĕ районра та хăшпĕр колхозсем ҫуракинче тунă ҫитĕнӳсемпе лăпланса ларни курăнат. Халĕ кашни колхоз умĕнче тăракан задачă вăл—тырпулсене уйран пуҫтарса кĕме хатĕрленесси.

Й. Ваҫилйĕв.

Ĕҫ тухăҫлăхне ӳстернипе

Апаккассинчи аласта ертелĕн членĕ (Ҫĕрпӳ р.) Игнатйĕвă Аннă 1937 ҫулта 1020 штук чăпта ҫапнăччĕ, 1938 ҫулăн 1-мĕш квартăлĕнче 1028 штук ҫапса кăларчĕ.

Ертел правленийĕ Игнатйĕвă йулташа ҫулленех канмали ҫурта йарса пычĕ. Кăҫал та ăна канма йама палăртнă.

А. Игнатйĕвă ĕҫне хакласа ертел правлени ăна 125 тенкĕ преми пачĕ.

Н. Иашков.

Хаҫатсене пăхса тухни

„Хăшпĕр ҫитменлĕхсем" тата бољшевикла критикă ҫинчен

Партин Тĕп Комитечĕ хаҫатсем ҫинче парти пурнăҫĕ ҫинчен ҫутатасси ҫинчен постановлени йышăннă хыҫҫăн Вăрмар районĕнчи „Трактăр" хаҫатăн кашни номĕрĕнчех парти тата комсомол пурнăҫĕ ҫинчен ҫырнă материалсем пичетленсе тухма пуҫларĕҫ. Статйасемпе заметкăсене хисеп йенчен илсе пăхсан, „Трактăр" хаҫат парти пурнăҫне лайăх ҫутатса пырат тесе шутлама пулат. Анчах хаҫатра пичетленнĕ статйасемпе заметкăсен содержанине, пахалăхне, политикăлă тата критикăлă ҫивĕчлĕхĕ йенчен пăхсан, пĕтĕмпех урăхла. Хаҫат партин йертсе пыракан оргăнĕсен суйлавĕ иртсе пынине тăршшĕпех ҫапла ҫутатса пычĕ.

„Пухура пур коммуниссем те пулчĕҫ. Пуху критикăпа самокритикăна анлă сарнипе иртрĕ. Партин йертсе пыракан оргăнĕсен суйлавне хатĕрленнĕ май парторганизаци умĕнче тăракан политикăлă тата хуҫалăхлă задачăсене мĕнле пурнăҫласа пырассине пухура ҫирĕппĕн кăтартрĕҫ." (№33).

Парти райкомĕн ĕҫĕнче пысăк ҫитменлĕхсем те сахал мар пулнă. Вĕсене коммуниссем критиклени пулмала ĕнтĕ. Анчах, хаҫат райкомăн ĕҫĕнчи ҫитменлĕхсемпе йаланашсем ҫинчен тĕплĕн ҫырма иккĕленет. 48-мĕш номĕрте, Партин районри пухăвĕ ҫинчен ҫырнă статйара „Трактăр" хаҫат:

„Тухса калакансенчен нумайĕшĕ ПСК(б)П райкомĕн ĕҫĕнчи паллă ҫитменлĕхсене тата туса ҫитермен ĕҫсене палăртса малашне вĕсене мĕнле тӳрлетессине кăтартса хăварчĕҫ", тесе ҫырат.

Парти пурнăҫĕ ҫинчен ҫырнă кашни статйан тата заметкăн содержанийĕ, стилĕ ҫавăн пек. Партин пуҫламĕш организацисен, уйрăм коммуниссен конкретлă йанăшĕсене, ҫитменлĕхĕсене бољшевикла критиклени, лайăх опытсене кăтартни ҫук. Ку вăл статйасене пуринчен ытла пĕр ҫын, хаҫат редактăрĕ Филиппăв йулташ хăй ҫырнинчен килет. Апрелпе май уйăхĕсенче хаҫатра парти пурнăҫĕ ҫинчен ҫырнă статйасемпе заметкăсем 17 пулнă пулсан, вĕсенчен 12-шне Филиппăв йулташ, икĕ статйине Кожин йулташ (редакци сотрудникĕ) ҫырнă. Коммуниссене, чи малтан парти активне, парти пурнăҫĕ ҫинчен статйасемпе заметкăсем ҫырас ĕҫе хутшăнтарман, автăрсен коллективĕ ҫук пирки те ĕнтĕ хаҫатри материалсем конкретлă, парторгсемпе коммуниссене кулленхи ĕҫре пулăшакансене ерсем мар.

Парти тата Сталин йулташ партиле-политикăлă ĕҫе хуҫалăх ĕҫĕсенчен уйăрма йурамаст тесе, вĕсене иккĕшне пĕрле ҫыхăнтарса туса пымала тесе вĕрентеҫҫĕ. Вăрмар районĕнче ҫулйер ĕҫĕ, укҫа-тенкĕ пухас т. ыт. хуҫалăхлă ĕҫсем пит кайа йулса пыраҫҫĕ, „Трактăр" хаҫат хăй те ҫавна йышăнат. Парторганизацисене партилĕ-политикăлă ĕҫе хуҫалăхлă задачăсемпе ҫыхăнтарса туса пыма вĕрентмеле. Хаҫат ун вырăнне „парти организацине парти ĕҫĕпе ытларах ĕҫлес вырăнне хуҫалăх ыйтăвĕсем йенне ҫавăрăнма пăхнăшăн" вăрҫат. Ҫапла, хаҫат хуҫалăх ĕҫне партилĕ ĕҫрен уйăрма вĕрентсе йанăш тăват. 46-мĕш номĕрти умстатйара хаҫат каллех политикăлă ĕҫсене хуҫалăхлă ĕҫсенчен уйăрмали шухăша сарат.

Апрелпе май уйăхĕсенче партин Вăрмар районĕнчи организацисенче парторгăнсен суйлавĕ пулса иртнĕ. Отчотла-суйлав пухăвĕсем ПСК(б)П Тĕп Комитечĕн Йанварти пленумĕн решенисене бољшевикла пурнăҫлас йенĕпе иртнĕ пулĕ. Ҫапла пулин те, Тĕпкомăн йанварти пленумĕн решенисене пурнăҫа кĕртес ĕҫ Вăрмар районĕнче мĕнле пынине хаҫат халĕ ĕнтĕ ҫутатма кирлĕ мар, тесе шутлат пулмала.

Хаҫатăн ҫĕнĕрен суйланă парторгсене, вĕсен заместителĕсене пулăшмала. Ҫĕнĕ парторгсем ĕҫлеме пуҫланăранпа вăхăт чылай иртрĕ. Партин районри пухăвĕ иртнĕ хыҫҫăн хаҫат парти пурнăҫне ҫутатассине пĕтĕмпех пăрахăҫ тунă. Парти пурнăҫĕпе ĕҫсене ҫутатасси ҫине кампанилĕ пăхма кирлĕ мар. Ана куллен, бољшевикла ҫивĕчлĕхпе ҫутатса пымала.

Александр Алка

Икĕ тĕнче—икĕ йурă

Пусмăрлă ҫĕршывăн пусмăрлă кунҫулĕ—
Иртнĕ кĕрхи каҫ пек сĕм хура кунсем...
Асилме те йавăр: кун пек чух куҫҫулĕ
Тумлатех хура-шур курнă ваттисен.

Ваттисем йурлаҫҫĕ: ҫăмăр шăпăртатнă,
Вĕҫхĕррисĕр ҫунă уй-хирсем ҫине;
Ăша ҫăмăр мар мĕн, куҫҫулленнĕ тар мĕн
Йухнă пирĕн хытă анасем ҫине.

Ваттисем йурлаҫҫĕ: тăвăл йаванатчĕ,
Шăхăратчĕ ҫилĕ пирĕн ҫĕр ҫинче;
Сил те, тăвăл та мар—пусмăр ҫаламачĕ
Йун сăхатчĕ пирĕн ҫара ӳт ҫинче.

Ваттисем калаҫҫĕ: епĕр ĕмĕтленнĕ,
Йумахри пек паттăр килесси ҫинчен,
Ĕмĕтленнĕ ирĕк йалкăщан хĕвелĕн
Ҫуттине пире вăл парасси ҫинчен.

Савнă ҫĕрĕм-шывăм, ман тăван ҫĕршывăм,
Иртнĕ хурлăхушăн ҫитрĕ ырлăху.
Вутлă ҫăмăр витĕр ҫĕнтерӳлĕн, сыввăн
Тупрĕ ҫĕн куна сан ирĕк халăху.

Ирĕклĕ ҫĕршывăн ирĕклĕ кунҫулĕ—
Ҫут хĕвеллĕ ир пек чун саваҫ кунсем...
Ҫитрĕ кĕтнĕ ĕмĕт. Кунпек чух кам йулĕ
Ӳҫсĕн йурламасăр савнăҫ йуррисем?

Йанăрат-и йурă аслă ҫĕрĕм-шывăм
Пурлăхлăн, илемлĕн йешерни ҫинчен,
Савнă ҫĕрĕн-шывăн мĕлйуншар хĕр-ывăљ
Паттăрăн, телейлĕн ҫитĕнни ҫинчен;

Йанăрат-и йурă сулхăн каҫăн-ирĕн
Таврара хаваслăх шăранни ҫинчен,
Кăмăл ҫĕкленмелĕх, чун уҫҫилĕх пирĕн
Чĕрери чи ҫывăх йурату ҫинчен.

Йанăрат-и йурă йунлă тăвăл умĕн
Ворошилăв учĕ кĕҫенни ҫинчен,
Хамăрăн ҫĕршывшăн епĕр ҫума-ҫумăн
Тăрса ҫапăҫмашкăн хатĕрри ҫинчен.

Кашни йурă—пирĕн пурнăҫ сăн-сăпачĕ;
Чи хитре сăмахлă пирĕн йурăра
Аслă Конституци параканăн йачĕ,
Хаклă Сталин йачĕ ăшшăн йанăрат.

Совет Сойузĕнчи курортсем

Сочи хулинче.

ӲКЕРЧĔК ҪИНЧЕ: Ленинград хули совечĕн сывлăх пайĕн санаторийĕ.

(Сойузфото).

Плана тултарассишĕн

КАНАШ. Вакунсем йусакан сават хăйĕн ĕҫ планне тултараймаст-ха. Халăх тăшманĕсем, троцкиссем, бухаринĕцсем—Чăваш республикĕн ҫак пысăк предпрййатине пăсассишĕн темĕн те тунă.

Строителствăн аслă инженерĕ пулнă Н е ҫ т ĕ р ă в електростанцине ĕҫе йарас срука икĕ хутчен пăснă. Саватăн техникăла директăрĕ пулнă Новожилăв, капиталљнăй строителства пайĕн пуҫлăхĕ пулнă Клавски сăтăрла ĕҫсене пĕлсе тăнă ҫинчех вĕсемпе кĕрешмен. Ҫапла вĕсем сăтăрҫăсене пулăшса пынă.

Електростанци ваљљи кăмрăк складне тăвассине йатарлăсах пройектпа пăхман, икĕ хуран лартнине пула пăс парассине чакарнă. Ҫапла майпа турбинăсене ĕҫе йарассине хăрушлăх умне илсе пынă.

Водопровод, плотина, сават таврашĕнчи транспăрт, канал тăвасси тата пурăнмали ҫурт-йĕр строителстви—сăтăрҫăсен алли пырса тĕкĕнмесĕр йулман.

Пурăнмали икĕ хутлă ҫуртсене 55 милиметрлă дисксем ҫине лартнă пулнă. Паллах, ку ҫав ҫуртсенче пурăнакансемшĕн пысăк хăрушлăх пулнă.

Хаљхи вăхăтра вакунсем йусакан сават умĕнче пысăк ĕҫсем тăраҫҫĕ. Чи малтанах, сăтăрлăх йулашкисене пĕтермеле. Електростанцисен ĕҫне йĕркелемеле тата халĕ тăвакан пысăк електричĕства станцине августăн 1-мĕш тĕлне експлоатацине парассишĕн кĕрешмеле. Електростанци ҫумĕнчи кăмрăк складне тума палăртмала, материаллă склад строителствине тытăнмала, сават таврашĕнчи чукунҫула пĕтĕмпех хурса тухмала тата ҫак ҫул ҫинчĕ савата килекен пăравуссемпе усă курмала.

Хаљхи вăхăтра сават хăйĕн производствă планне тултарса пыраймаст. Ийунĕн 8 кунĕнче ĕҫ планне 84 процент кăна пурнăҫланă. Ҫакă пуринчен ытла сават администрацийĕ тата производствăри командирсем йертсе пырайманнинчен килет.

Тимĕрҫĕ цехне кирлĕ материалсемпе кăмрăка ҫителĕклĕ парса тăмаҫҫĕ. Механикă цехĕнчи чылай станоксене халех йусама кирле. Анчах сават станоксене йусас ĕҫе тăсса пырат.

Саватăн кивĕ руководителĕсем (Мокейĕв) социалисăмла ăмăртупа стахановла йухăма чăрмантарса пынă. 1937 ҫулхи февраљте сават 150 вакун йусаса плана 100 процент тултарнă. Ҫавăн хыҫҫăн сават начаљникĕ пулнă Мокейĕвран стахановĕцсене премилеме укҫа уйăрма ыйтнă. Ҫав ыйту ҫине вăл:—Кирлĕ-ши пире вĕсемпе аппаланма?—тенĕ.

Саватра стахановла йухăма халиччченех пуҫарса йертсе пымаҫҫĕ. Ҫавна пула саватри чăн-чăн стахановĕцсене никам та тĕплĕн пĕлмест. Вĕсене шута илес ĕҫе ахаљ учотчиксене шанса панă.

Стахановла йухăма кирлĕ пек сарса пырсан, чĕрĕ ҫынсем ҫине сталинла пăхсан, Канашри вакунсем йусакан сават производствăна ҫĕклеме, плана вăхăтра тултарса пыма пултарат.

В. Ластăчкин.

Й. Виктăрăв

Пĕтĕм тĕнчери лару-тăрăва пăхса тухни

Пулас историк 1938 ҫулхи майăн 20-мĕш кунне: вăл—Йевропă пĕтĕмĕшлĕ ҫĕнĕ вăрҫа калама ҫук ҫывăх тăнă тапхăр пулнă, тесе палăртĕ. Ҫав вăхăтра Германи фашисăмĕ Чехословаки ҫине тапăнма хатĕрленнĕ. Агреҫҫилĕ ĕҫсемшĕн никам та наказани паманнине пĕлсе тăрса (наказани паманни вăл йăлана кĕрсе ҫитнĕ ĕнтĕ), Германи агрессăрĕ тĕнче умне пулса иртнĕ тепĕр ҫĕнĕ факт, Чехословакине тытса илнĕ факта лартасшăн пулнă.

Германи пичетĕнче Чехословакине хирĕҫле кампани, ҫар йенĕпе тивĕҫлĕ хатĕрленнисем пекех, тахҫантанпах пулса пынă. Анчах ҫав хатĕрленӳ ĕҫĕсем Гитлĕрпа Муссолини курнăҫса калаҫнă хыҫҫăн татах та вăйланчĕҫ, вăл курнăҫу вăхăтĕнче Вăтаҫĕрти тата Кăнтăр-Хĕвелтухăҫĕнчи—Йевропă кам аллинче пулмалине валеҫсе тухнă. Фашисла диктатăрсем ҫĕрĕн ҫав пайĕсенĕ ҫакăн пек валеҫсе тухнă: Йугослави, Греци тата Албани—Итали аллине, Чехословаки, Румыни, Венгри, Болгари тата Турци—Германи аллине куҫмала, тенĕ.

Чи малтанах Чехословакине тапăнма палăртнă. Чехословакири гитлĕрла агентурă—генлейновĕцсем—ишĕлтерӳлĕ тата провокацилĕ ĕҫсем тунипе Германи ваљљи Чехословакине тапăнса кĕрсе кайма никĕс хатĕрлеме хушу илнĕ. Чăнах та, майăн 22-мĕшĕнче муниципалитет суйлавĕсене иртерме палăртнă май, генлейновĕцсем халăха терроропа пусмăрласа, провокацилĕ „инцидентсем" т. ыт. туса, хăйсен активлăхне сасартăках вăйлатса йачĕҫ. Ҫав вăхăтрах генлейновĕцсем требăванисем кăларса тăратса, Чехословаки правителствине хытăрах хĕсме пуҫларĕҫ, вăл требăванисене пурнăҫа кĕртес пулсан Чехословаки республикĕ никама пăхăнмасăр пурăнасси пĕтсе ларнă пулĕччĕ. Генлейн Судет-Нимĕҫ облаҫне йалтах автономи пама ыйтнă ҫеҫ те мар, тата Чехословакире пурăнакан мĕн пур нимĕҫсене хăй аллинче тытса тăмали права пама та ыйтнă. Кунсăр пуҫне, вăл правителствăра представителствă тума тата Чехословакин тулашри политикине Германи фашисăмĕн интересĕсем майлă улăштарма ыйтнă, чи малтанах Франципе тата ССР Сойузĕпе пĕр пĕрне пулăшасси ҫинчен тунă догăвăра пăрахăҫа кăлартарма ыйтнă.

Чехословаки правителстви, Генлейнпа калаҫма хăй хатĕр тăнине тата чылай уступкăсем тума килĕшнине кăтартса панине пăхмасăрах, Чехословаки республикĕн суверенитечĕпе килĕшме пултарайман Генлейн требăванийĕсене татăклăнах сирсе пăрахрĕ. Чехословаки халăхĕн чи нумай ытларахăшĕн шухăш-кăмăлĕсене шута илсе, правителствă оборонă тĕлĕшпе чылай ĕҫсем туса иртерчĕ, ҫак ĕҫсем вĕсем, пĕр йенчен, Германи ҫарĕсене Чехословаки чиккисем патне каплантарса пынине хирĕҫ ответлени пулчĕҫ, тепĕр йенчен—пулма пултарнă фашисла провокацисене сирсе йарса, суйлавсене лăпкăн иртерме пулăшрĕҫ.

Чехословаки правителствин ҫăмлă та ҫирĕп позицийĕ ырă резуљтат патне илсе пычĕ. Франци—Чехословаки ҫине Германи тапăнас-мĕн пулсан, Франципе Чехословаки хушшинче тунă догăвăртан тухса тăракан хăйĕн обйазателствисене пурнăҫа кĕртесси ҫинчен пĕлтерчĕ. Совет Сойузне илес пулсан, унăн позицийĕ пирки никам та иккĕленмен.

Агрессăр тата ăна пулăшакансем йăвăр лару-тăрăва кĕрсе ӳкрĕҫ, мĕншĕн тесен вăрҫăпа тапăнма хатĕрленекен ҫĕршыва коллективлăн хӳтлес тĕлĕшпе ĕҫлеме пуҫларĕҫ. Англи, Франци ҫирĕп тăнине шута илсе тата вăл Чехословакине пулăшассине сирсе йама тăрăшса, Гитлĕртан Чехословаки ҫине тапăнассине урăх вăхăта хăварма йăлăнма пуҫларĕ. Англи правителстви Берлинра ҫапла та хăратса пăхрĕ: Франципе Германи хушшинче тавлашу тухас-мĕн пулсан, Англи правителствин ирĕксĕрех Франци йенне тăмала пулат, тенĕ.

Гитлĕр кайала чакрĕ. Вăл Чехословаки ҫине сиксе ларайманĕ. Анчах та ҫакăнтан пĕртте—Германи хăйĕн йутҫĕршывсене туртса илес планĕсене пăрахăҫа кăларнă, тесе вывăд тума йурамаст. Германи фашисăмĕ Чехословакине хирĕҫ ҫĕнĕ провокацисем хатĕрлет; вăл Чехословакине шалтан сиктерсе йама май паракан лару-тăру туса хума пĕтĕм вăйран тăрăшат. Ҫак тĕлĕшпе Берлин сăлтав ҫукран мар ĕнтĕ Лондăн пулăшассине шанат.

Вăтаҫĕр Йевропари лару-тăру малтанхи пекех ҫивчĕ тăрат-ха. Йулашки кунсенче пулса иртнĕ событисем агрессăра чарса лартма май пуррине кăтартса пачĕҫ. *Чехословаки халăхĕ хăй никама пăхăнмасăр пурăнассишĕн тата ирĕклĕхшĕн фашисла пусмăрлăха хирĕҫ пĕтĕм вăйран кĕрешме* хатĕр. Ҫакна вăл суйлавсенче хăйĕн сасĕсене фашисăма хирĕҫле партисене панипе ĕнентерсе пачĕ, ҫакна вăл хăйĕн дисциплинăлăхĕпе ĕнентерсе пачĕ, ҫакна вăл фашисăмпа вăрҫа хирĕҫ пĕрлĕх фрончĕшĕн хăватлă йухăмпа ĕнентерсе пачĕ. Сарăлса кайнă событисенчен хăйсене хăйсем миршĕн тăратнăр тесе калакан ҫĕршывсем вывăдсем тучăрччĕ. Вывăд паллах: агреҫҫине хирĕҫ кĕрешессине пурнăҫа кĕртме пулат, ăна миршĕн тата хăрушсăрлăхшăн коллективлăн кĕрешсен ҫеҫ пурнăҫа кĕртме пулат.

* * *

Германи Чехословаки ҫине тапăнма хатланса пăхни — Испани халăхне хирĕҫ айаплă вăрҫă пуҫласа йанă Италипе Германи фашисĕсене Англипе Франци йенчен пулăшнăран пулнă, тата Австрине тытса илсен ҫав государствăсемех, Австри никама пăхăнмасăр пурăнассине гарантиленĕ пулсан та, хирĕҫ тăманран пулнă. Ҫав вăхăтрах тата Чехословакири событисен урокĕсем ҫакна кăтартса пачĕҫ: фашисăма хирĕҫ кĕрешнĕ ҫĕрте тĕп тата ĕҫе татса паракан фактăр вăл—халăх массисем пулса тăраҫҫĕ. Испани халăхĕ интервентсен мĕн пур шухăшласа хунисене, Британи дипломатин мĕн пур чейе комбинацийĕсене ӳпĕнтерсе йанă пекех; Китай халăхĕ Йапони агрессăрне ҫĕнтерме пулмаст тесе калакан йумаха ҫапса аркатнă пекех,—Чехословаки халăхĕ те фашисла захватчиксене тапăнса кĕме парас марришĕн ҫине тăнипе агреҫҫи планĕсене аркатса йачĕ тата буржуалă-демократилĕ текен государствăсене татăклă позици йышăнмала турĕ.

Чехословакири событисен урокĕсем ҫакна кăтартса пачĕҫ: агрессăра пурне те тума пултаракан хăватлă вăй пек сăнласа кăтартма хătланаҫҫĕ пулсан та, вăл вăйлах мар иккен. Ҫакна Йапони Китайа хирĕҫ пуҫласа йанă вăрҫă примерĕнчен те уҫҫăн курма пулат. Тайерчжуан патĕнче Йапони ҫарĕсене ҫĕмĕрсе тăкнă хыҫҫăн, Йапони командованийĕ мĕн пур резервăсене мобилизацилерĕ.

Хăйсене пысăк вăйсем парса пулăшнă хыҫҫăн, Йапони ҫарĕсем Ҫуйчжоу ҫине ҫĕнĕрен тапăнса пыма пуҫларĕҫ, ҫак наступленине вĕсем Китай ҫарĕсен ҫак фронтра ҫапăҫакан тĕп массисене татса илсе ҫĕмĕрсе тăкас шухăшпа тунă. Ҫак операци ăнăҫсăрах пĕтсе ларчĕ. Китай ҫарĕсен тĕп массине хăрушă вырăнтан урăх ҫĕре куҫарса йетерсен тин Китай ҫарĕсем Ҫуйчжоуран тухса кайнă. Фронтăн ҫак участкине Йапони ҫарĕсем пырса капланнипе усă курса, фронтăн ытти участкисенче китайĕцсем вăрҫă тĕлĕшпе чылай ăнăҫлă операцисем турĕҫ.

Йапони ҫарĕ Китайра ăнăҫлă ҫĕнтерӳ тăвайманнипе Йапонире тарăху пит ӳссе кайнă. Паллах ĕнтĕ, Йапони правителствине реорганизацилессине те тарăху ӳснĕ пиркийех тунă, правителствă составне Угаки генерала кĕртсе ăна йут ҫĕршыв ĕҫĕсен министăрне лартнă, Хараки генерала кĕртсе ҫутĕҫ министăрне лартнă. Кабинет составĕнче ҫавăн пекех тата ытти улшăнусем те пулса иртнĕ.

Йут ҫĕршывсенчи пĕтĕм пичет Йапонин ҫĕнĕ правителствине вăрҫă кабинечĕ, тесе хаклат, вăл кабинетăн задачи, пĕр йенчен, ҫĕршыври *хирĕҫекенесене путарса лартасси*, тепĕр йенчен—Китайри агреҫҫийĕ татах та ытларах сарса йарасси пулса тăрат. Анчах ҫакна калас пулат: ҫĕнĕ кабинет хăй умĕнче тăракан йăвăрлăхсене пĕлет. Ку вăл Угаки генерал зайавленинчен те лайăх курăнат, вăл пĕтĕм Китайа туртса илме май ҫуккине йышăннă. Ҫак кунсенче Угаки пичет представителĕсемпе калаҫнă чухне вăрҫă, пите нумайа тăсăлмала тата йăвăр пулмала, Китай хирĕҫ тăрасси вăйланса пынине шута илмеле, тесе каланă.

Анчах Йапони войеншчини тепле хайарлансан та, вăл Китайа часах ҫĕнтерессине шанма пултараймаст. Пачах урăхла, Китайăн вăйĕсем ӳссе пыраҫҫĕ. Ҫĕршывра Йапонине хирĕҫ нацилĕ пĕрлĕх фрончĕ тĕрекленет. Ҫав фронт ҫирĕппи, вăл сарлакан та тарăнăн ӳссе пыни—Китай халăхĕ Йапони захватчикĕсене пурпĕрех ҫĕнтерессине ĕнентерсе тăрат.

* * *

Вăрҫă чĕртсе йаракансен агреҫҫилĕ политикине пула пĕтĕм тĕнчери лару-тăру ҫивĕчленсе ҫитни океан леш йенчи ҫĕршывсенче, уйрăмăн илсен Пĕрлешӳлĕ Штатсенче обшчĕствăлă шухăша хускатса йачĕ. Фашисăма тата агреҫҫине хирĕҫ пĕрле пĕтĕҫсе кĕрешме кирлине Америкă халăхĕн йышларах та йышларах сийĕсем ăнланса илеҫҫĕ. Пĕрлешӳлĕ Штатсенче фашисăмпа вăрҫа хирĕҫ кĕрешме пĕрлĕхлĕ демократилĕ фронт тăвассишĕн пыракан йухăм,

(Йулашки 4-мĕш страницăра)

Китай çарĕнчи бойецсен отрйачĕ вĕренӳре.

(Сойузфото).

ИСПАНИРИ ФРОНТСЕНЧЕ

Хĕвелтухăç фронтĕнче, Арагони провинцин çурçĕр пайĕнче, республикăн уйрăм дивизисем вăрçна çĕрте, хайар çапăçусем пулса пыраççĕ. Ґалхавçăсен пысăк çухатусем пулаççĕ.

Леванта фронтĕнче вăйлă çапăçусем Усера патне пырса кĕнĕ çĕрте (Лусенăдел Сид районĕ) пулса пыраççĕ, унта республикă çарĕсем тăшмана хирĕç çав тери хыттăн тăрса вăрçаççĕ.

Ийунĕн 11-мĕшĕнче пĕр кун кунĕпех республикă самоӆотчĕсем Левантă фронтĕнче мĕн пур участкăсенче те пăлхавçăсен позицисем çине ăнăçлăн бомбăсем пăрахнă тата вĕсем çине пулеметсенчен пенĕ. Çапăçнă чухне республика истребителĕсем фашиссен 7 самоӆотĕнчен иккĕшне персе антарнă.

Ытти фронтсенче улшăнусем пулман.

* * *

Ийунĕн 10-мĕшĕнче фашиссем Аликанте çине тепĕр хут пырса бомбăсем пăрахнă. Майăн 25-мĕшĕнчен тытăнса çав порт çине 32 хутчен бомбăсем пăрахнă, бомбăсем пăрахнипе 500 çын вилнĕ тата 2.000 çынна йăхăн аманнă. Кунсăр пуçне 80 çурта ишĕлтерсе антарнă. Англин виçĕ пăрахутне шыва путарнă.

(ТАСС).

Шкул библиотеки тата вĕренмĕли литературă кăларас ĕç

Шкул библиотеки тата вĕренмĕли литературă шкулта ачасене коммунисла вĕрентсе çитĕнтерес ĕçре питех те пысăк вырăн йышăнаççĕ. Лайăх йĕркелене шкул библиотеки вĕренӳпе воспитани ĕçне йĕркелес тата вĕренекенсен политикăла тавракурăмне анлăлатас йĕнĕне калама çук вăйлă хĕçпăшал пулса тăрать. Анчах та пирĕн шкул библиотекисем ача-пăча литературипе вĕренмели литературă тĕлĕшĕнчен, илемлĕ литературăна политикăла литература тĕлĕшĕнчен ытла та чухăн. Çатра Маркăри пуçламĕш шкул (Ишлей р.) аллă çула йахăн ĕçлет ĕнтĕ, çапах та кунти шкул библиотекинче пĕтĕм пуйанлăх 10—15 кĕнекерĕн ытла мар Ача-пăча илемлĕ литератури çук, ачасем хăйсен пĕлĕвĕсене çирĕплетсе пыма кирлĕ литературă ниçта та тупса вулаймаççĕ. Кĕнекесем çукки учителĕн ĕçне те питĕ йăвăрлатать. Кĕнеке çук пиркийех, ачасене килте, клас тулашĕнче вулаттармали литературăна класра, урок вăхăтĕнче вулаттарма лекет, çакна пула учитĕл хаклă вăхăта нумай çухатать.

Шкул библиотекисене йĕркелес, вĕсене куллен çĕнĕрен-çĕнĕ литературăпа пуйанлатса пырас ĕç районсенче тӳсме çук начар тăрать. Районри çутĕç пайĕсем кун пирки сахал шухăшлаççĕ, шкул библиотекисем тăвас ĕçе вĕсем пĕтĕмпех шкул пуçлăхĕсемпе директăрсем çине йăвантараççĕ. Теприсем тата райçутĕç пайĕ сутă тăвакан организаци мар тесе калаççĕ. Çавна пулах ĕнтĕ шкулсем илсе пĕтермен литературă 14 район тăрăх халӗхи вăхăта 32.144 тенкелĕх выртать. Уйрăм районсене илсен, Хĕрлĕ Чутай районĕ тăрăх ку литературă 3.000 тенкелĕх выртать, Çĕрпӳ районĕ тăрăх 3.680 т., Вăрнар районĕ тăрăх—3.900 тен. т. ыт. те. Кун çинчĕн Çутĕç Халăх Комиссариачĕ тахçанах пĕлсе тăрать, анчах çитменлĕхе пĕтерес тесе, татăклă ĕç туман.

Хăшпĕр çĕрте тата вĕренӳре кирлĕ паха нагӆаднăй пособисем райçутĕç пай склачĕсенче темиçе шер çул выртаççĕ. Çĕрпӳ районĕнчи çутĕç пайĕн складĕнче шкулсене питех те кирлĕ пособисем: йăвăççĕн коллекцийĕсем, йĕрлĕрен препаратсем, тайга зонисене кăтартакан таблицăсем, противогазсем т. ыт. те 8-мĕш çул йăваланса выртаççĕ.

Кусем ĕнтĕ çутĕç пайĕсенчи хăшпĕр работниксем шкул пурнăçĕ çине пăхас та тимсĕр пăхни çинчен калаççĕ.

Шкулăн тата çавăн пекех кашни вĕренекенĕн библиотекине пуйанлатас тесен, кĕнекепе сутă тăвакан тата кĕнеке кăларакан организацисем уйрăмах лайăх ĕçлемеле. Çутĕç Халăх Комиссариачĕпе Чăвашгиз 1937—38 вĕренӳ çулне шкулсем валӆи тивĕçлĕ учебниксем параймарĕç. Нумай шкулсем çак çула учебниксемсĕр тенĕ пекех ирттерчĕç. Шестаковăн „ССРС историне" (чăвашла куçарнине) пирĕн шкулсем вĕренӳ çулĕн виççĕмĕш чĕрекĕ пĕтнĕ тĕле тин илчĕç, хăшпĕр учебниксем иртнĕ çултанпах типографинче выртаççĕ (вырăс чĕлхипе вуламалли кĕнеке, Баранскин „Физикăла географийĕ" тата ыт. те.).

Çĕнĕ, 1938—39 вĕренӳ çулĕ пуçланнă тĕле Çутĕç Халăх Комиссариачĕпе Чăвашгиз вĕренмели литературă пĕтĕмпе 44 йатпа кăлармалла палăртнă, анчах халӗхи вăхăта типографине 8 йат анчах панă, вĕсен шутне иртнĕ çул панисем те кĕреççĕ. Вĕренмели литературă кăларас ĕç пысăк хăрушлăх умĕнче. Çутĕç Халăх Комиссариачĕпе Чăвашгиз малалла та çаплах ĕçлесе пырсан, шкулсем çĕнĕ вĕренӳ çулĕнче татах учебниксемсĕр йулма пултараççĕ.

Çĕнĕ вĕренӳ çулне хатĕрленес ĕçре—вĕренмели литература кăларасси, шкулсенчи библиотекăсене йĕркелесси, кашни учителпе вĕренекене тивĕçлĕ учебниксем парасси пысăк ыйтусенчен пĕри пулса тăрать. Çавăнпа та Çутĕç Халăх Комиссариачĕпе вырăнти çутĕç органĕсен, Чăвашгизăн тата кĕнекепе сутă тăвакан организацисен ку тĕлĕшпе уйрăмах хытă ĕçлемеле. Кашни шкулта лайăх библиотекă йĕркелемеле, кашни ачана лайăх кĕнеке памала.

П. Терентйев.

Икĕ уйăх кăтартаççĕ

„Ленин в Октябре" фиӆм колхозсенче. Тутаркас районĕнче „Ленин в Октябре" йатла кинофиӆм кăтартма тытăнчĕç. Ку фиӆма Анчар тата Шăтракасси йалсовчĕсенчи колхозсенче кăтартрĕç. Фиӆма районри колхозсенче икĕ уйăх хушши кăтартаççĕ.

М. Исайев.

Йалти суту-илӳ

Мосторгăн авто-магазинĕ Ворошилăв йачĕпе тăракан колхоза пынă (Реутăв районĕ, Мускав облаçĕ).

(Сойузфото).

Китай халăхĕ çĕнтеричченех кĕрешет

Чан Кай-ши зайавленийĕ

Йут çĕршывсенчи пичет представителĕсемпе калаçнă чухне Китайăн нацилĕ правителствин пуçлăхĕ Чан Кай-ши Китай халăхĕ Йапони захватчикĕсене хирĕç 11 уйăх хушши çапăçнин итогĕсене каласа панă.

Вăл çапла каланă:

Вуннăр уйăх хушши хĕçпăшалпа хирĕç тăни Китай халăхĕн çирĕплĕхне тĕреклетрĕ тата кунпа пĕрлех çав кĕрешӳре епĕр çĕнтерес шанчăка вăйлатрĕ. Вуннăр уйăх хушши Йапони захватчикĕсене хирĕç кĕрешни пĕтĕм нацине нихçанхинчен те çирĕп пĕрлештерчĕ. Çакăн пек пĕрлешнине пур çĕрте те курма пулать. Уйрăмах, Йапони захватчикĕсем йышăннă районсенче лайăхрах курăнать. Китайăн пĕтĕм халăхĕ халӗхи вăхăтра нацилĕ правителствăшăн тăрать, йапонецсене хĕçпăшалпа хирĕç тăрас çĕре активлă хутшăнать.

Вăрçă пуçламĕшĕнче йапонецсем, пирĕн çапăçас вăй кунран-кун чакса, начарланса пырать, тесе шутланă. Вĕсем шутланă тăрăх, Китай вăрçа виçĕ уйăхран мала чăтма пултараймаст. Анчах апла пулмарĕ. Китай Йапони агреççийĕ пынă чухне мĕн вĕçне çитиччченех хирĕç тăрать. Китай халăхĕн нумай вăхăт хушши хирĕç тăрас пултарулăхне халĕ ĕнтĕ кăтартнă. Пирĕн халăх хăй çĕнтересе çирĕп шанса тăрать тата пимĕнле те кайала кайас çук. Пирĕн çар хуппинче паттăрлăх никаçанхинчен те вăйлă. Вăрçăн халӗхи тапхăрĕнчи йăвăрлăхсене инçетри хуласене йе районсене хӳтĕлес йĕнпе тунă çитĕнӳсемпе йе çитмĕвлĕхсемпе ăнлантарса пама çук. Епĕр Çуйчжоуран тата Кайфынран тухса кайни, ытлашши çынсем çухатас мар, тенĕ ĕлтавпа пулнă. Халӗхи вăхăтран пуçласа вăрçă ĕçĕсем сăрт-туллă, кӳлĕсем нумай вырăнсенче пулаççĕ, çакă Йапони çарĕсен вăрçă ĕçĕсене чылай чăрмантарать. Çаксем вĕсем пурте епĕр чăнах çĕнтерес шанчăклăха ӳстереççĕ.

Китай вăл хăйне никама пăханмалла мар тăвассишĕн кĕрешет. Епĕр тăшмансене çĕнтерни чыслăх уйаве пулса тăрать. Епĕр шанатпăр,—тенĕ йулашкинчен Чан Кай-ши,—пирĕн халăхăн паттăр кĕрешӳне туслă çĕршывсем хӳтлесе пырĕç, вĕсем Китай тĕлĕшпе мораӆлĕ обйазательствăсене хăвартрах пурнăçа кĕртме пулăшĕç".

(ТАСС).

Чехословакири лару-тăру

Ийунĕн 12-мĕшĕнче Чехословакире муниципалитет (вырăнти тытăм органĕсем) суйлавĕсен йулашки, виççĕмĕш турĕ пулса иртнĕ.

Сасăлании результачĕсене халĕ пичетлесе кăларман-ха.

Суйлавсем пулас умĕн, ийунĕн 10-мĕшĕнче çĕрле, Гитлĕр агенчĕсем—генлейнăвĕцсем Германи чиккинчи çывăхĕнче Варнсдорф хулинче каллех тепĕр инцидент туса ирттернĕ. Генлейнла 50 штурмовик пĕр социал-дĕмократ çуртне çĕмĕрсе кĕнĕ. Полици пырса çитсен, штурмовиксем ăна хирĕç тăнă. Çакăн хыççăн 47 штурмовике арĕсленĕ. Ун хыççăн генлейнăвĕцсем суд çурчĕ умĕнче провокацилĕ демонстраци тунă.

Прага хулинче суйлавсем умĕн Чехословакири çамрăксен хăватлă демонстрацийĕ пулса иртнĕ, унта 50 пин çын пулнă. Демонстрацине Чехословакин пур кĕтесĕсенчен те пынă. Демонстрацире пулнисем правителствăшăн шанчăклăн пулма тупа тунă тата республикăна никама пăхăнса тăмала мар тăвассишĕн кĕрешме хатĕр тăнине шантарнă.

Чехословакири мĕн пур халăх суйлавсен йулашки турĕн результачĕсене хыттăн кĕтет.

(ТАСС).

Пĕтĕм тĕнчери лару-тăрăва пăхса тухни

(Йулашки)

изоӆаци политикине, „нейтралитет" тесе калакан политикăна пăрахăçа кăларассишĕн пыракан йухăм саралать.

Америкăри Пĕрлешӳлĕ Штатсен йут çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Хелл ийунĕн 3-мĕшĕнче тухса каланă сăмах, паллах, çав йухăм ӳсе пынине палăртса парĕ. Хелл хăйĕн сăмахĕнче агреççилĕ çĕршывсен политикине хыттăн сивлерĕ тата агреççи чарусăрланса алхасна вăхăтра Пĕрлешӳлĕ Штатсем нимĕн туймасăр тăма пултараймаççĕ, тесе каларĕ. Хелл изоӆаци политикине хирĕç, вăл Пĕрлешӳлĕ Штатсен интересĕсемпе килĕшмен пирки, хыттăн тăчĕ.

„Епĕ çакна çирĕп ĕненсе тăратăп,—тенĕ вăл,—изоӆационисăм политики вăл хăрушсăрлăха пĕлтермест çеç те мар, тата пачах урăхла, тĕрексĕрлĕх çăлкуçĕсенчен пĕри пулса тăрать. Пĕтĕм тĕнчери ĕçсене хутшăнма килĕшместпĕр пулсан та, епĕр çав çавах тĕнчерен уйăрăлса кайма пултараймастпăр. Изоӆаци политикине пурнăçа кĕртсе пыма хăтлании пире ытти çĕршывсене кирек мĕнле те пулсан пулăшу парассинчен уйăрса йанă пулĕччĕ тата хамăрăн интерессене сийен кӳнĕ пулĕччĕ. Епĕр пĕтĕм тĕнчери ĕçсене хутшăнма килĕшменни саккунсăрлăха тата вăрçă вăйĕсене çĕнтерӳ тума çеç пулăшассĕ".

Хелл сăмахне хаклана чухне çакна шута илес пулать: Америкăри Пĕрлешӳлĕ Штатсен правителствине Америкă буржуазин реакцилĕ елеменчĕсем калама çук хытă хĕсеççĕ, вăл елементсем хăйсен интересĕсемшĕн тăрăшса изоӆаци политикине тытса пыртарасшăн. Çав реакцилĕ ушкăнсен влийанийĕ питĕ вăйлă: шăпах çавсем ĕнтĕ Испанине хĕçпăшал йама чартарчĕç.

Хелл изоӆационисçене хирĕç хыттăн тухса каланă факт вăл, пĕрремĕшĕнчен, Америкăри Пĕрлешӳлĕ Штатсен правителстви Америкă халăхĕн шухăш-кăмăлне шута илнине, тата, иккĕмĕшĕнчен, пĕтĕм тĕнчери лару-тăру çивĕчленсе кайнине ăнланса илнине ĕнентерсе парать.

Хелл тухса калани татăкла решенисем йышăнмали тата уçăмлă та çирĕп позици тытса пымали вăхăтсем çитсе килнине кăтартса парать. Хелл сăмахĕ Пĕрлешӳлĕ Штатсен политикинче хусканусем малала сарăлса пынине ĕнентерсе парать, вăл хусканусем иртнĕ çулăн вĕçĕнче Рузвеӆтăн Чикагăра каланă паллă сăмахĕнчех палăрчĕç. Ун чухне президент Рузвеӆт мир пайланман принципа йышăннă, агреççине хыттăн сивлĕнĕ тата „агрессăра хирĕç карантин" тума чĕннĕ.

Хелл кăтартса панă программа мĕнле татăклă ĕçсем патне илсе пырассине халех калама хĕн-ха. Çакă пур пĕрех паллă: Америкă халăхĕ миршĕн кĕрешнĕ çĕрте, агреççине хирĕç кĕрешнĕ çĕрте Америкăри Пĕрлешӳлĕ Штатсен вырăн йышанма ыйтать.

А. М. Горький вилни икĕ çул тултарнă тĕле

Кăçалхи йунĕн 18-мĕшĕнче вырăссен аслă писателĕ Алексей Максимович Горький вилни икĕ çул тултарать. Троцкиссем-бухаринцăсем—Германипе Йапони фашисăмĕн шпионĕсем пролетариатăн йуратнă писателне тискеррĕн вĕлерчĕç. Анчах Горький вилнĕ пулсан та, унăн вилĕмсĕр чаплă произведенийĕсене мĕлйуншар ĕççыннисем пысăк интереспа вулаççĕ. Аслă писатĕл произведенийĕсене тĕрлĕрен наци чĕлхисемпе куçарса мĕлйуншар екземпӆарпа пичетлесе кăлараççĕ.

Чăваш государствă издателстви А. М. Горький кунĕсем тĕлне калавсен сборникне пичетлесе кăларма хатĕрлесе çитерне. Ку сборникре Горькин çамрăк чухне çырнă калавĕсем пулаççĕ („Макар Чудра", „Двадцать шесть и одна", „Старуха Изергиль", „Дед Архип" т. ыт. те). Сборникре 10 пичетлĕ листă пулать.

Ку тарихчен Горькин „Детство", „Мои университеты", „Мать", „На дне" произведенисене чăвашла куçарса кăларнă. Çывăх вăхăтра „Фома Гордеев" романа пичетлесе тухмала. „Враги" пйесăна куçарса пĕтерне.

„Сунтал" журналăн май уйăхĕнчи номĕрĕнче Горькин „Мещане" пйеси пичетленет.

Шупашкарти Тĕп библиотекă ийунĕн 18-мĕш тĕлне библиотекăра А. М. Горький çинчен выставкă организацилет. Выставкăра аслă писателĕн произведенийĕсем тата унăн пурнăçĕпе ĕçне çутатса паракан фото-ӳкерчĕксемпе материалсем пулаççĕ.

Парти вĕренĕвĕн Тĕп çурчĕ ийунĕн 17-мĕшĕнче каçхине 7 сехетре „Горький—публицист" темăпа лекци ирттерет.

С. К.

КĔСКЕН

● **Колхозри стадион.** Туçи йалĕнчи (Çĕрпӳ районĕ) „Спартак" спорт обществи стадион турĕ. Стадиона карта çавăрнă. Унта хал, футболлă тата валейболла выӆаççĕ.

В. Платонăв.

● **Колхоз театрĕ савăтра.** Чăвашсен иккĕмĕш колхоз театрĕ Канашри вакунсем йусакан савăт клубĕнче П. Н. Осипăв çырнă „Айтар", Айзманăн „Сӳнçин хупалчи" пйесĕсене выӆаса парĕ. Кунсăр пуçне пысăк концерт лартрĕ. Концертра артиссем Д. Фурманăвăн „Чапайĕв" романĕнчен илнĕ „Сломихинри çапăçу" сыпăкне, сăвăсем т. ыт. те вуласа пачĕç, вырăсла, чăвашла йурăсем йурларĕç, музыкă каларĕç.

А. Иванов.

Ответлă редактăр заместителĕ И. П. ПАВЛАВ—ПИНЕР

Шупашкарти потребкоопераци техникумĕ

1938—1939 ВĔРЕНӲ ÇУЛĔНЧЕ 1-МĔШПЕ 2-мĕш КУРССЕНЕ

Вĕренме илесси çинчен пĕлтерет

Техникум товароведсем, плановиксем тата потребкоопераци çистеми тăрăх бухгалтĕрсем хатĕрлет.

Вĕренме 15 çулхисенчен пуçласа 30 çулхисем таран пур граждансене те илеççĕ.

1-мĕш курса туллимар вăтам шкул пĕтерни чухлĕ йе вăтам шкулта 7-мĕш класра вĕренни чухлĕ пĕлӳ илнисене илеççĕ.

2-мĕш курса вăтам шкул пĕтернисене илеççĕ.

Пур студентсене те стипенди тата выртса тăма, тӳшек, çытар тата ыт. те параççĕ. Техникум çумĕнче; кĕпе çумали, шăл тӳрлетмели кабинет, амбулатори, парикмахерски тата столовăй пур.

Зайавленисене августăн 5-мĕшĕччен йышăнаççĕ.

Вĕренме кĕрес текенсен çак документсене (подлинник) тăратмала:

а) Директăр йачĕпе зайавлени,

б) вĕренни çинчен документ,

в) хăш çулта çурални çинчен свидетелствă,

г) икĕ фото-картăчка, кашнин çине алпусса, пĕр-пĕр учреждени çирĕплеттермеле,

д) сывлăх пирки справкă.

16 çула йе ытларах çитнисен тĕрĕслӳ испытанине пурĕ паспăрт илсе пымала.

Тĕрĕслӳ испытанине тăратмала тунисене повесткăпа чĕнеççĕ.

1-мĕш курса вĕренме кĕме тĕрĕслӳ испытани августăн 7-мĕшпе 22-мĕш хушшинче ССР Сойузĕн Конституцийĕ, математикă, вырăс чĕлхи тата географи ыйтаççĕ.

Туллимар вăтам шкулта 7-мĕш класра тĕп предметсемпе „отличнă" паллăпа ытти предметсемпе (рисовани, черчени, йурласси, музыкă, физкуӆтурă) „хорошо" паллăран кайа мар илнисене испытанисĕрех илеççĕ.

2-мĕш курса вĕренме кĕрекенсене çакăн пекех вăтам шкулти 10-мĕш клас программи тăрăх испытани ыйтаççĕ.

Шкултан тĕп предметсемпе „отличнă" ыттисемпе „хорошо" паллăсемпе вĕренсе тухнисене испытанисĕрех илеççĕ.

Вĕренме çентабĕрĕн 1-мĕшĕнче пуçлаççĕ.

Испытанисĕрех илнисене вĕренме уйрăм повесткăпа чĕнеççĕ.

Техникум адрĕсĕ: Гор. Чебоксары, ЧАССР, улица Карла Маркса, 80.

ДИРЕКЦИ.

2—1

Шупашкарти фармацевтсене

(ЕМЕӆСЕМ ХАТĔРЛĔМЕ)

вĕрентекен шкул

1938—39 вĕренӳ çулĕнче пĕррремĕш курса вĕренексене илесси çинчен пĕлтерет

ВĔРЕНМЕЛИ СРУК ВИÇĔ ÇУЛ

15 çулхисенчен пуçласа 35 çулхисем таран хĕрарăмсене тата арçынсене те, вăтам шкулта çичĕ çултан кайа мар вĕренни чухлĕ пĕлӳ илнисене йышăнаççĕ.

Зайавленисене ийунĕн 20-мĕшĕнчен пуçласа августăн 1-мĕшчен йышăнаççĕ.

Зайавленисене шкул директăрĕ йачĕпе çак документсемпе пĕрле (подлинниксем кирлĕ) памала:

1 Хăш çулта çуралнине кăтартакан свидетелствă,

1. Вĕренни çинчен свидетелствă.

3. Государствăн емеллекен учрежденинчĕн илнĕ ĕнентерӳ, ун çинче вĕренме кĕрекенĕн сывлăхĕ медицинă вăтам шкулне вĕренме кĕме йурăхлине кăтартни пулма кирлĕ.

4. Икĕ фотокартăчкă (хăй алпусса çирĕплеттерни).

Кусемсĕр пуçне 16 ç. иртнисем хăйне пĕрле паспăрт илсе килеççĕ.

Испытанине тăма ирĕк панисене хут йарса чĕнеççĕ. Чĕннĕ тăрăх çеç килмеле. Чĕнмесĕр килнисене испытанине кĕртмеççĕ.

Испытанисем августăн 1-мĕшĕнчен пуçласа 20-мĕшĕччен пыраççĕ.

Шкула кĕрекенсене пурне те математикă тăрăх (арифметикă, алгебрă, геометри), физикă, географи, вырăс чĕлхи тата политграмăтă тăрăх (туллимар вăтам шкул программи чухлĕ) испытани тăваççĕ.

Çичĕ çуллă шкултан тĕп предметсемпе „отлично" тата ыттисемпе (рисовани, черчени, йурласси, музыкă тата физкуӆтурă) „лайăх" паллăран кайа мар паллăсемпе вĕренсе тухнисене испытанисĕрех илеççĕ, çавнашкалах тата тулли вăтам шкулсенчен вĕренсе тухнисене испытани тумаççĕ.

Испытани тытнисене августăн 21-мĕшĕнчен 25-мĕшĕччен вĕренекенсен шутне кĕртеççĕ.

Вĕренекенсене валӆи общежити пур, вĕреннине кура стипенди параççĕ.

Заӆатисем çентабĕрĕн 1-мĕшĕнче пуçланаççĕ.

Шкул адрĕсĕ: гор. Чебоксары, Волгострой, Формацевтическая школа.

ДИРЕКЦИ.

2—1

Атăлăн сулахай йенче Шупашкар хули тĕлĕнче Сивчир станцийĕ шывлă-лачакалă шурлăхлă вырăнсене (сивчир сарма пултаракан вăрăмтунасене (кăмарисене) пĕтерес шутпа) парижская зелеӆ емелпе сирпĕтсе тухать. Вăл вырăнсенчи шывран сирпĕтнĕ хыççăн

3 КУН ХУШШИ

выӆăхсене шăварма йурамаст

Затон, Араква тата Травйанка шывĕсене емелпе сирпĕтмеççĕ.

Хăш кун сирпĕтессине уйрăм пĕлтерусем çапса пĕлтереççĕ (перевоз пристăнĕ çинче, Миӆутинри хăма савăтĕнче тата Голодйанкăра).

Хăш кун тата мĕнле вырăнсене емелпе сирпĕтесси çинчен Миӆутинри Сивчир пунктинче ыйтса пĕлме пулать.

Сивчир станци.

2—2

ЧĂВАШСЕН ГОСУДАРСТВĂ ФИЛАРМОНИЙĔ

Чăвашсен Государствă Академи Театрĕнче Украинăн музыкăлă драмипе комедийĕсен

Йулашки спектакӆ

Ийунĕн 14-мĕшĕнче

Автарĕ (Н. Гогоӆ произведенийĕ тăрăх) СТАРИЦКИЙ

„Тарас Бульба"

4 пайлă историлĕ драмă.

Коллективлă курма зайавкăсем йышăнаççĕ: Ирхине 9 сехетрен—телефон № 1—71, кăнтăрла 12 сехетрен—тел. № 1—26.

Кассă 12 сехетрен уçă.

Спектакӆ каçхине 9 сехетре пуçланать.

АДМИНИСТРАЦИ.

Уполномоченный Чувашглавлита № 293

Гор. Чебоксары, Типография № 1 Чувашполиграфтрест. Заказ № 500.